çул тухать. Хакĕ 15 пус

1942 МАРТ 19 КĔÇНЕРНИКУН 65(6090) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

25. Куславкка районĕнчи Варасăр ялсоветĕнчи «Правда» колхоз (колхоз председателĕ Ю. А. Рожнов юлташ). Колхоз çуракинче кирлĕ чухлĕ вăрлăх хатĕрлесе хунă. 127 центнер пăрçа алăпа суйласа илсе тасатса хунă. Плугсене, сеялкăсене, сӳресене, культиваторсене тата кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсанă. Хĕллехи агротехникăллă мероприятисен планне йăлтах тултарнă. Колхоз уя 2846 лав тислĕк кăларнă, 30 центнер кĕл тата 26 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ, 36 гектар çинче юр тытнă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмăнах 5-мĕш бригада (бригадирĕ С. Кузнецов юлташ) лайăх ĕçленĕ.

26. Иван Яковлевич Перов—Куславкка районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозăн уйхир бригадин бригадирĕ. Перов юлташăн бригади çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхлăх материал 100 процентчĕпех хатĕрлесе сортласа хунă. Пăрçа вăрлăхне пĕтĕмпех алăпа суйласа илсе тасатса хунă. Ялхуçалăх машинисене, инвентаре тата кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсанă. 25 гектар çинче юр тытнă. Уя 250 лав тислĕк тăкнă, 15 центнер кĕл тата 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Лашасем лайăх, мăнтăр.

27. Куславкка районĕнчи Кармăш ялсоветĕнчи «Новая жизнь» колхоз (колхоз председателĕ Г. З. Захаров юлташ). Колхоз вăрлăхлăх тырра пур культурăсем енĕпе те 100 процентчĕпех хатĕрлесе сортласа хунă. Ялхуçалăх машинисемпе инвентаре пĕтĕмпех юсанă. Колхоз уя 260 лав тислĕк тăкнă, 12 центнер кĕл тата 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Колхоз акана тухма пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе Я. С. Беляев юлташ бригади чи малта пырать.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

119-мĕш, 133-мĕш, 366-мĕш, 174-мĕш, 361 мĕш, 363-мĕш, 88-мĕш тата 111-мĕш стрелковăй дивизисенчен, 82-мĕш мотострелковăй дивизирен, 75-мĕш тата 38-мĕш стрелковăй бригадăсенчен Гвардейски дивизисемпе бригадăсем тăвасси çинчен

Тăван Совет çĕршывĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пулса пынă нумай çапăçусенче 119-мĕш, 133-мĕш, 366-мĕш, 174-мĕш, 361-мĕш, 363-мĕш, 88-мĕш тата 111-мĕш стрелковăй дивизисем, 82-мĕш мотострелковăй дивизи, 75-мĕш тата 38-мĕш стрелковăй бригадăсем паттăр та хăюллă, дисциплинăллă та организованнăй пулнине кăтартрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, çав дивизисемпе бригадăсем фашистла войскăсене питĕ пысăк çухатусем кӳрĕç, аркатмаллах хăватлăн пыра-пыра çапса, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере пычĕç, нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр çапа-çапа аркатрĕç. Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăюллă та паттăр, çирĕп те дисциплинăллă тата организованнăй пулнăшăн, çав дивизисемпе бригадăсен личнăй составĕ геройлăх кăтартнăшăн, асăннă дивизисемпе бригадăсенчен Гвардейски дивизисемпе бригадăсем тунă.

119-мĕш стрелковăй дивизирен—17-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ генерал-майор Березин.

133-мĕш стрелковăй дивизирен—18-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ генерал-майор Захаров.

366-мĕш стрелковăй дивизирен—19-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ полковник Буланов.

174-мĕш стрелковăй дивизирен—20-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ подполковник Куценко.

361-мĕш стрелковăй дивизирен—21-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ подполковник Михайлов.

363-мĕш стрелковăй дивизирен—22-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ полковник Свиридов.

88-мĕш стрелковăй дивизирен—23-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ полковник Соловьев.

111-мĕш стрелковăй дивизирен—24-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ подполковник Рогинский.

82-мĕш мотострелковăй дивизирен—3-мĕш Гвардейски мотострелковăй дивизи—дивизи командирĕ полковник Акимов.

75-мĕш стрелковăй бригадăран—3-мĕш Гвардейски стрелковăй бригада—бригада командирĕ 1-мĕш ранглă капитан Сухиашвили.

38-мĕш стрелковăй бригадăран—4-мĕш Гвардейски стрелковăй бригада—бригада командирĕ полковник Данилян.

Асăннă дивизисемпе бригадăсене Гварди ялавĕсем параççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи составне орденсемпе медальсем парса наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе: артиллерин генерал-лейтенантне В. Г. Корнилов-Другова, генерал-майора Г. Ф. Тарасова, артиллерин генерал-майорне П. Ф. Швецова.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 4 çынна;
ХĔРЛĔ ÇАЛТĂР орденĕпе—10 çынна;
«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе—6 çынна;
«ЗА ОТВАГУ» медальпе – 1 çынна.

(ТАСС).

Виçĕ районăн канашлăвĕ

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Çак кунсенче Етĕрне хулинче Хĕрлĕ Чутай, Советски тата Етĕрне районĕсен кустовой канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура парти райкомĕсен секретарĕсем, райсовет исполкомĕсен председателĕсем, МТС директорĕсем, политотдел начальникĕсем, районри çĕрĕçпай заведующийĕсем, наркомзагăн районри уполномоченнăйĕсем, ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем пулчĕç. Канашлура çуракине хатĕрленес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татас ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслерĕç, çавăнтах вăрман хатĕрлевĕпе çулйĕр строительствинчи ĕçсене те пăхса тухрĕç.

Канашлура çакă палăрчĕ: Советски район вăрлăх хатĕрлесе хывас плана 88 процент çеç пурнăçланă. Хăшпĕр культурăсем енĕпе вăрлăх хатĕрлес ĕç уйрăмăнах начар пырать. Сăмахран, клевер вăрлăхне пурĕ те 30 процент çеç хатĕрлесе хунă.

Пухнă вăрлăхсене 54,4 процент кăна сортланă. Колхозсенче чылайĕшĕнче вăрлăхсене начар усраççĕ.

Ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтермен. Районĕпе паянхи кун тĕлне 2000 плугран 1317 плуг кăна юсанă, 157 сеялкăран 121-шĕ çеç çуракине хатĕр. Минераллă удобренисем турттарса килмелли плана пурĕ те 7,45 процент çеç пурнăçланă.

Хĕрлĕ Чутайпа Етĕрне районĕсенче те, Советски районри пекех, çуракине хатĕрленес ĕç ăнăçлах пымасть.

Канашлу асăннă районсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татас тĕлĕшпе те япăх ĕçленине палăртрĕ. Уйрăмăнах ку тĕлĕшпе Етĕрне районĕ кайра пырать.

Канашлу мартăн 20-мĕш тĕлне тырпулсене çапса пĕтерме, кĕске срокрах тата пур культурăсем енĕпе те çитĕклĕ таран вăрлăх хатĕрлесе хума, вĕсене сортлама, ялхуçалăхĕн мĕнпур машинисене юсаса çитерме решени йышăнчĕ. Канашлу вăрман хатĕрлевĕпе çулйĕр строительствин планне хăвăртрах тата ăнăçлăн пурнăçлас тесен мĕн-мĕн тума кирлине тĕплĕн кăтартса, паха сĕнӳсем парса хăварчĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Строительство участникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет президиумĕн хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли, пуçламĕшĕ ĕнерхи номерте).

Пăрачкав районĕ тăрăх

125. Геннадий Иванович **Григорьева**—Пăрачкав райçутĕç пайĕн инспекторне.

126. Лавр Александрович **Киреева** — çĕр чавакана, Козловка ялсоветне кĕрекен «Восход» колхозăн колхозникне.

127. Виктор Андреевич **Коноплева** — çĕр чавакана, Семеново вăтам шкулĕнче вĕренекене.

128. Сергей Егорович **Семенова** — стройучастокăн десятникне, Пăрачкав лесхозĕн объездчикне.

129. Григорий Петрович **Слепцова** — çĕр чавакансен бригадирне, Ряпино ялсоветне кĕрекен Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

130. Федор Спиридонович **Фролова** — Низовка ялсоветне кĕрекен Советсен 6-мĕш Съезчĕн ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

Советски район тăрăх

131. Илья Афанасьевич **Афанасьева**—çĕр чавакана, Хурамал ялсоветне кĕрекен Калинин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

132. Мирон Владимирович **Владимирова**—çĕр чавакансен бригадирне, Хурамал ялсоветне кĕрекен «Чекист» колхозăн колхозникне.

133. Анастасия Павловна **Ильинана** — çĕр чавакансен бригадирне, Мăн Чураш ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозăн колхозницине.

134. Наум Ефимович **Каратаева** —çĕр чавакансен бригадирне, Хурамал ялсоветне кĕрекен Калинин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

135. Семен Иванович **Кочкова** — çĕр чавакансен бригадирне, Мăн Чураш ялсоветне кĕрекен «Комбайн» колхозăн бригадирне.

136. Анна Лукинична **Лукинана** —çĕр чавакана, Турай ялсоветне кĕрекен «Пучах» колхозăн колхозницине.

137. Ксенофонт Максимович **Максимова**—çĕр чавакана, Хурамал ялсоветне кĕрекен «Чекист» колхозăн колхозникне.

138. Леонид Семенович **Семенова** — çĕр чавакана, Тойкилт ялсоветне кĕрекен «Динамо» колхозăн колхозникне.

139. Александр Галлактионович **Суворова**—стройучастокăн начальникне.

140. Анна Федоровна **Федоровăна** — çĕр чавакана, Тойкилт ялсоветне кĕрекен Тельман ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

141. Павел Анисимович **Чижова** — бригадире, Хурамал ялсоветне кĕрекен Калинин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

Сĕнтĕр районĕ тăрăх

142. Варвара Ивановна **Бурмистровăна**—çĕр чавакана, Шомик ялсоветне кĕрекен «Волга» колхозăн колхозницине.

143. Мария Михайловна **Ефимовăна**—çĕр чавакана, Пушкăрт ялсоветне кĕрекен «XIII лет РККА» колхозăн звеньеводне.

144. Гаврил Моисеевич **Павлова.**

145. Анна Димитриевна **Смирновăна**—çĕр чавакана, Оринино ялсоветне кĕрекен «Красное Сормово» колхозăн колхозницине.

146. Матрена Гавриловна **Соловьевăна**—турттаракана, Калайкасси ялсоветне кĕрекен «Марксист» колхозăн колхозницине.

147. Макар Иванович **Тепеева.**

148. Михаил Николаевич **Угольникова**—Сĕнтĕр райсовет исполкомĕн председательне.

Вăрмар районĕ тăрăх

149. Анна Алексеевна **Алексеевăна**—çĕр чавакана, Вăтакас ялсоветне кĕрекен «Путь Ленина» колхозăн колхозницине.

150. Иван Андреевич **Андреева**—çĕр чавакансен бригадирне, Текеш ялсоветне кĕрекен «Большевик» колхозăн колхозникне.

151. Семен Андреевич **Андреева**—çĕр чавакансен бригадирне, Аслă Чак ялсоветне кĕрекен «Атнаш» колхозăн колхозникне.

152. Елизавета Васильевна **Гренадерскаяна**—çĕр чавакана, Пăвакасси ялсоветне кĕрекен «Красная звезда» колхозăн колхозницине.

153. Степан Григорьевич **Григорьева.**

154. Прокопий Иванович **Иванова** — ВКП(б) Вăрмар райкомĕн инструкторне.

155. Федор Семенович **Семенова**—прораба.

Çĕрпӳ районĕ тăрăх

156. Елизавета Алексеевна **Алексеевăна**—çĕр чавакансен бригадирне, трахсестрана.

157. Константин Васильевич **Васильева**—çĕр чавакансен бригадирне, Тавăшкасси ялсоветне кĕрекен «Коммунар» колхозăн колхозникне.

158. Петр Павлович **Джишкарианине**—прорабна.

159. Михаил Иванович **Иванова**—çĕр чавакансен бригадирне, Кушкă ялсоветне кĕрекен «Çĕнĕ çул» колхозăн колхозникне.

160. Тимофей Иванович **Иванова**—çĕр чавакансен бригадирне, Янсакасси ялсоветне кĕрекен «Путь Ленина» колхозăн колхозникне.

161. Приспитдина Игнатьевна **Игнатьевăна**—çĕр чавакансен бригадирне, Тавăшкасси ялсоветне кĕрекен «Машиностроей» колхозăн колхозницине.

162. Иван Лаврентьевич **Немилова**—платниксен бригадирне, Аслă Тугай ялсоветне кĕрекен «Молодая сила» колхозăн колхозникне.

163. Геннадий Иванович **Никитина**—главнăй инженера.

Шупашкар районĕ тăрăх

164. Васса Алексеевна **Алексеевăна**—çĕр чавакансен бригадирне, Чăкăр ялсоветне кĕрекен Войков ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

165. Макар Васильевич **Васильева**—десятнике, Çатра-Лапсар ялсоветне кĕрекен «Путь Ленина» колхозăн колхозникне.

166. Иван Сергеевич **Глухова**—çĕр чавакансен бригадирне, Заводски ялсоветне кĕрекен «Красный Флот» колхозăн бригадирне.

167. Михаил Степанович **Еремеева**—çĕр чавакансен бригадирне, Çĕньял ялсоветне кĕрекен «Ударник» колхозăн колхозникне.

168. Михаил Иванович **Корнейкона**—стройучастокăн прорабне, Канашри вагонсем юсакан заводри стройучастокăн начальникне.

169. Мария Никифоровна **Николаевăна**—çĕр чавакана, Заводски ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

170. Михаил Александрович **Попова**—çĕр чавакансен бригадирне, Заводски ялсоветне кĕрекен «Осоавиахим» колхозăн колхозникне.

171. Мария Степановна **Скворцовăна**—çĕр чавакансен бригадирне, Чăкăр ялсоветне кĕрекен «Новая деревня» колхозăн колхозницине.

172. Семен Федорович **Федорова**—çĕр чавакансен бригадирне, Чăкăр ялсоветне кĕрекен «Трудовик» колхозăн бригадирне.

173. Сергей Федорович **Федорова**—десятнике, Заводски ялсоветне кĕрекен «Осоавиахим» колхозăн бригадирне.

174. Николай Семенович **Хабарова**—Шупашкар райсовет исполкомĕн председателĕ пулнăскере, халĕ Çĕрпӳ райсовет исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене тăваканскере.

175. Василий Семенович **Хабарова**—çĕр чавакана, Заводски ялсоветне кĕрекен «Осоавиахим» колхозăн колхозникне.

Чкаловски район тăрăх

176. Василий Иванович **Ведненкона**—стройучастокăн главнăй инженерне.

177. Сергей Иванович **Горбунова**—платниксен бригадирне, Сăкăт ялсоветне кĕрекен «Красное знамя» колхозăн колхозникне.

178. Никита Долматович **Долматова**—çĕр чавакансен бригадирне, Тăрăн ялсоветне кĕрекен «Красное Батырево» колхозăн бригадирне.

179. Сергей Васильевич **Живилова**—старши инженера.

180. Николай Васильевич **Кравцова**—стройучасток начальникĕн заместительне.

181. Агриппина Павловна **Кузнецовăна**—çĕр чавакана, Патăръел ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

182. Менат Тагирович **Латыпова**—çĕр чавакана, Кăсăл Чишме ялсоветне кĕрекен «Маяк» колхозăн колхозникне.

183. Сильвестр Иванович **Ложкина**—çĕр чавакансен бригадирне, Туçа ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

184. Александр Александрович **Люкина**—çĕр чавакансен звеньеводне, Çĕнĕ Ахпӳрт ялсоветне кĕрекен Сталин ячĕпе тăракан колхозăн звеньеводне.

185. Энвар Ямалтдинович **Минаева**—çĕр чавакана, Патăръел педучилищинче вĕренекене.

186. Ямалтдин Хусеинович **Минаева**—Кăсăл Чишме ялсоветне кĕрекен «Маяк» колхозăн председательне.

187. Алексей Николаевич **Николаева.**

188. Антонина Ильинична **Смирновăна**—çĕр чавакана, Патăръел ялсоветне кĕрекен «Путь Ленина» колхозăн колхозницине.

Шăхасан районĕ тăрăх

189. Надежда Васильевна **Васильевăна**—çĕр чавакана, Малти Антавăш ялсоветне кĕрекен «Клим Ворошилов» колхозăн колхозницине.

190. Юрий Яковлевич **Еремина** — стройучасток начальникне.

191. Мария Михайловна **Михайловăна**—çĕр чавакана, Туçи Çармăс ялсоветне кĕрекен «Оборона» колхозăн колхозницине.

192. Николай Михайлович **Орлова** — десятнике, Шăхасан ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозăн колхозникне.

193. Михаил Родионович **Родионова** — ВКП(б) Шăхасан райкомĕн пропагандистне.

194. Ян Яковлевич **Чадарина** — прораба.

Шăмăршă районĕ тăрăх

195. Тимофей Сергеевич **Бочкарева** — çĕр чавакансен звеньеводне, Вырăс Чукал ялсовечĕн секретарьне.

196. Алексей Федорович **Дергачева**—десятнике, Шăмăршă райсовет исполкомĕн çулйĕр отделĕн заведующине.

197. Елизавета Макаровна **Кузнецовăна**—çĕр чавакансен звеньеводне, Мало-Буяново ялсоветне кĕрекен «Знамя Октября» колхозăн колхозникне.

198. Николай Алексеевич **Лугинина**—прораба, Шăмăршă вăрманпромхозĕн лесничине.

199. Иван Петрович **Малеева** — çĕр чавакана, Кив Чукал ялсоветне кĕрекен «Красный пахарь» колхозăн колхозникне.

200. Иван Осипович **Малофеева** — çĕр чавакана, Пăчăрлă Пашъел ялсоветне кĕрекен «Красная Нива» колхозăн колхозникне.

201. Афанасий Иванович **Матвеева** — ВКП(б) Шăмăршă райкомĕн пропагандистне.

202. Семен Митрофанович **Платонова**—çĕр чавакансен бригадирне, Кивĕ Шăмăршă ялсоветне кĕрекен «Динамо» колхозăн бригадирне.

203. Михаил Сидорович **Сидорова** — çĕр чавакансен бригадирне, Карапай Шăмăршă ялсоветне кĕрекен Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

204. Халиулла Ялалтдинович **Ямдиханова**—çĕр чавакана, Палтиел ялсоветне кĕрекен «Кзыл Юл» колхозăн колхозникне.

Çĕмĕрле районĕ тăрăх

205. Андрей Алексеевич **Абашина** — ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн инструкторне.

206. Михаил Васильевич **Булыгина**—çĕр чавакансен бригадирне, Мăн Улхаш ялсоветне кĕрекен «Первое Мая» колхозăн колхозникне.

207. Домна Ивановна **Гудновăна** — çĕр чавакана, Хутар ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

208. Ульяна Ивановна **Ивановăна** — çĕр чавакана, Лесно-колхознăй ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозăн колхозницине.

209. София Ивановна **Игашевăна** — çĕр чавакана, Çĕмĕрле хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

210. Павел Никифорович **Карпунина**— Çĕмĕрле лесничествин лесникне.

211. Димитрий Иванович **Короткова**— Улхаш лесничествин лесникне.

212. Сергей Петрович **Носк[illegible]** — Çĕмĕрле райсовет исполкомĕн председательне.

213. Ефим Степанович **Сергеева.**

214. Егор Гурьевич **Смехова** — бригадире, Лесно-колхознăй ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозăн колхозникне.

215. Сергей Александрович **Федорова** — десятнике, Çĕмĕрлери кирпĕч заводĕн служащине.

Етĕрне районĕ тăрăх

216. Димитрий Павлович **Круглова** — çĕр чавакана, Етĕрне ялсоветне кĕрекен «Комсомол» колхозăн колхозникне.

217. Анастасия Павловна **Мурзинăна** — çĕр чавакана, Йĕкĕт ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозăн колхозницине.

218. Яков Никитич **Соколова** — çĕр чавакана, Етĕрне ялсоветне кĕрекен «Дружба» колхозăн колхозникне.

219. Вера Васильевна **Шигинăна**—çĕр чавакансен бригадирне, Полянка ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

Елчĕк районĕ тăрăх

220. Петр Степанович **Блинова** — çĕр чавакана, Патреккел ялсоветне кĕрекен «Осоавиахим» колхозăн колхозникне.

221. Никандр Никитич **Волкова** — ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарьне.

222. Андрей Прохорович **Емельянова** — çĕр чавакана, Вăрăм Хăва ялсоветне кĕрекен «Хунав» колхозăн колхозникне.

223. Иустина Никитична **Журавлевăна** — çĕр чавакана, Чăваш Каркалар ялсоветне кĕрекен «Правда» колхозăн колхозницине.

224. Ульяна Васильевна **Карсаковăна** — çĕр чавакана, Тĕмер ялсоветне кĕрекен «Коминтерн» колхозăн колхозницине.

225. Мария Павловна **Павловăна** — çĕр чавакана, Патреккел ялсоветне кĕрекен «Ново-Ищеряково» колхозăн колхозницине.

226. Варвара Егоровна **Смирновăна** — çĕр чавакана, Çĕнĕ Пăва ялсоветне кĕрекен Тимирязев ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

Тăвай районĕ тăрăх

227. Тимофей Иванович **Баданова** — платниксен бригадирне, Мучар ялсоветне кĕрекен «25-е Октября» колхозăн колхозникне.

228. Петр Федорович **Брагина** — стройучастокăн прорабне.

229. Шимон Лазаревич **Брацлавские**—стройучастокăн начальникне.

230. Фекла Евдокимовна **Евдокимовăна** — çĕр чавакана, Тушкил ялсоветне кĕрекен «Звезда» колхозăн колхозницине.

231. Прасковья Яковлевна **Емельяновăна**—строительствăри главнăй врача.

232. Елизавета Ефимовна **Ефимовăна** — çĕр чавакана, Еншик-Нăрваш ялсоветне кĕрекен «Красная Чувашия» колхозăн колхозницине.

233. Гарегин Павлович **Пополиянa** — стройучастокăн инженерне.

234. Васса Федоровна **Федоровăна** — çĕр чавакана, Тăрмăш ялсоветне кĕрекен «Хучел» колхозăн колхозницине.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ И. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти мартăн 16-мĕш.

„Пионер Чувашии" ятлă танк тăвар

Етĕрне хулинчи пионерсем чĕнсе калани

Эпир халĕ отечественнăй аслă вăрçăн йывăр кунĕсене пурăнса ирттеретпĕр. Пирĕн аттесемпе пиччесем—Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем—ирсĕр фашистсене хамăрăн çĕр çинчен хăвалаççĕ. Пирĕн аннесемпе аппасем—работницăсемпе колхозницăсем—тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Фашистсем пире тарçăсем тăвасшăн, пирĕн хуласемпе ялсене пĕтересшĕн, пирĕн пуянлăха çаратасшăн. Вĕсем шкулсене ишеççĕ, учебниксене, кĕнекесене çунтараççĕ, айăпсăр халăха, ачасене ним хĕрхенӳсĕр вĕлереççĕ.

Ачасем, фашизмран усалрах тăшман пирĕн урăх çук. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн çĕршыври пионерсемпе шкул ачисем фронтра тăшмана хирĕç кĕрешекен аппĕсемпе пиччĕшсене, тылра тăрăшса ĕçлесе фронта пулăшакан аппĕшĕсемпе амăшĕсене тивĕçлĕ ачасем пулма тăрăшаççĕ. Отличнăй вĕренесси—ачасемшĕн вăрçă вăхăтĕнчи закон. Хĕрлĕ Çара пулăшасси—кашни пионерпа шкул ачин тивĕçĕ.

Эпир, Етĕрне хулинчи пионерсем, хамăр çĕршыври ытти вĕренекенсем пекех, тăшмана хирĕç кĕрешме тăван çĕршыва мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшатпăр. Эпир вуншар центнер тимĕр-тăмăр, çĕршер килограмм эмел курăкĕсем пухнă, «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума сахал мар укçа панă, халь нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи ачасем валли кĕпе-йĕм, тумтир, урана тăхăнмалли япаласем пухатпăр. Етĕрнери вăтам шкулта вĕренекенсем хушшинче кăна 170 япала пухăннă. Пирĕн хушăра тимуровецсем сахал мар.

Орденлă Чăваш республикинчи пионерсемпе шкул ачисем! Атьăр Хĕрлĕ Çар валли «Пионер Чувашии» ятлă танк тăвар. Çав танк пирĕн çĕр çине килсе кĕнĕ фашистсене хирĕç татти-сыпписĕр кĕрештĕр, вĕсене çĕмĕртĕр. Эпир вăл танка тума 3.000 тенкĕ укçа пуçтартăмăр та ĕнтĕ, сире пиртен пример илме чĕнетпĕр.

Пурте, пĕр çын пек, «Пионер Чувашии» танка тума укçа пухас ĕçе хутшăнар! Хĕрлĕ Çарăн вăйне тĕреклетер, усал тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкар!

Етĕрне хулинчи пионер активĕн пухăвĕ хушнипе:

РАЯ КОБЫЛКИНА
КОЛЯ СОКОЛОВ
ШУРА БЕР
ЖЕНЯ АНИКИНА
т. ыт. те.

ВЛКСМ Обкомĕнче

ВЛКСМ Чăваш Обком бюровĕ Етĕрне хулинчи пионерсен «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас тĕлĕшпе тунă пуçарăвне ырларĕ. ВЛКСМ райкомĕсен тата пуçламăш организацисен секретарĕсене Етĕрнери пионерсен чĕнĕвне вĕренекенсен пухăвĕсенче, звеносен, отрядсен сборĕсенче сӳтсе-явма, танка тума кирли çинчен кашни вĕренекене тĕплĕн ăнлантарма хушрĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

Чугунçул транспортĕнчи поездной тата маневровăй бригадăсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçукçи çинчен

Поездной тата маневровăй бригадăсен ĕçукçи нормисене тунă çĕрте уйрăм депосемпе узелсен ĕçĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине тата мĕнле условисенче ĕçленине шута илмен пирки пулакан йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес, поездной тата маневровăй бригадăсен ĕçукçин гарантиллĕ виçине тăвас шутпа СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла йышăннă:

1. Машинистсемпе вĕсен помощникĕсен, кондукторсен, кочегарсен, поездсемпе вагон мастерĕсен, поезд составителĕсен, сцепщиксен, скрутчиксен, башмачниксен, механизациленĕ горка операторĕсен ĕçукçине ÿстерес тата 1942 çулти мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа вĕсен ĕçукçин çакăн пек ставкине тăвас:

ПРОФЕССИСЕМ	Уйăхри ставкăсем (тенкĕ шучĕпе) депосен, кондукторски резервсен тата узелсен разрячĕсем тăрăх		
	I	II	III
ИС, ФД тата СОк сериллĕ паровозсен, электровозсен тата тепловозсен машинисчĕсене	700	625	550
ЭХО, Декапод, СО тата СУ паровозсен машинисчĕсене	650	575	525
Ытти сериллĕ паровозсен машинисчĕсене	600	550	500
Маневровăй паровозсен машинисчĕсене	550	500	475
ИС, ФД, СОк сериллĕ паровозсен тата тепловозсен машинист помощникĕсене	450	420	385
ЭХО, Декапод, СО тата СУ паровозсен машинист помощникĕсене	435	400	370
Ытти серилле паровозсен машинист помощникĕсене	400	375	340
Маневровăй паровозсен машинист помощникĕсене	385	350	325
ИС, ФД тата СОк серилĕ паровозсен кочегарĕсене	350	320	300
Ытти паровозсен кочегарĕсене	315	290	265
Курьерски поездсен кондукторĕсене:			
главнăйсене	500	425	375
старшисене	325	300	250
Хăвăрт çÿрекен, инçене çÿрекен, грузсем турттаракан, сборнăй тата транспортнăй пассажирски поездсен кондукторĕсене:			
главнăйсене	400	350	325
старшисене	250	230	220
кĕçĕннисене	200	180	170
Вырăнти тата хула таврашĕнчи пассажирски тата грузсем турттаракан (передаточнăй, вывозной, хозяйственнăй) поездсен кондукторĕсене:			
главнăйсене	350	325	300
старшисене	225	215	205
Грузсем турттаракан поездсем çинче ĕçлекен поезд тата вагон мастерĕсене	400	380	365
Поездсен составителĕсене	400	350	300
Сцепщиксене, скрутчиксене тата башмачниксене	300	275	250
Механизациленĕ горкăсен операторĕсене	400	350	325

Старши машинистсене, вĕсем пĕр харăс виçĕ поезда илсе çÿренĕ чух, машинистсен ставкинчен 5 процент чухлĕ ытларах тÿлемелли йĕркене çаплипех хăварас.

2. Халиччен пулнă йĕркене улăштарас шутпа, 1942 çулти мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа, поезднойпа маневровăй бригадăсен уйăхра тумалли [illegible] тултарнине уйăхра ĕçленĕ пĕтĕм [illegible] кура шутламалла тăвас, нормăна ирттерсе тултарнăшăн вара прогрессивлă ĕçукçине çакăн пек шутласа пырас:

уйăхри нормăна 10 процент таран ирттерсе тултарсан, нормăран ирттерсе тунă çак ĕçшĕн 2 хут ÿстернĕ расценкăпа тÿлес, 10 процентран ытларах ирттерсе тултарнăшăн 3 хут ÿстернĕ расценкăпа тÿлес.

Уйăхри нормăна ирттерсе тултарнăшăн ĕçукçине прогрессивлă расценкăпа тÿлени чухне [illegible] тÿлемеççĕ.

3. Фронт таврашĕнчи çулсем çинче, грузсем питех те нумай турттармалли çулсем çинче ĕçлекен поездной тата маневровăй бригадăсен йывăр ĕç условийĕсене шута илсе, 1942 çулти мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа поездной тата маневровăй бригадăсен ĕçукçине пĕрре кайса килнĕшĕн (хакĕ километртан) е маневрлă ĕçшĕн [illegible] ÿстерес:

а) фронт таврашĕнчи çулсем çинче: мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа май уйăхне çитиччен [illegible] 30 процент чухлĕ; [illegible] — 40 процент чухлĕ; май — сентябрь хушшинче — 20 процент чухлĕ, фронт участокĕсенче — 30 процент чухлĕ;

б) грузсем питех те нумай турттармалли Томск, Омск, Караганда, Кăнтăр Урал, Л. М. Каганович ячĕпе тăракан, Пермь, В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан, Пенза, Хусан, Горький, Çурçĕр, Ярославль, Ленин, Рязаньпа Урал хушшинчи, Оренбург, Сталинград тата К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан çулсем çинче пĕрре кайса килнĕшĕн (хакĕ километртан) е маневрлă ĕçшĕн мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа май уйăхне çитиччен [illegible] 20 процент чухлĕ, май — сентябрь хушшинче 10 процент чухлĕ ÿстерес.

4. Паровозсене начартарах тата хăмăр кăмракĕсемпе, тата кăмракĕсемпе хутăштарнă антрацитпа, [illegible] кăмракĕсемпе 70 процент ытларах [illegible] хутăшнă кăмрак хутăшĕсемпе, çакăн пек вутăпа, е кăмракпа вутта хутăштарса хутакан паровозăн бригадăсене хавхалантарас шутпа, çакăн пек [illegible] кайса çÿренĕшĕн 10 процент чухлĕ ÿстерсе тÿлемелле тăвас.

5. Поезд бригадисене çул çĕмĕрĕлнĕ пирки, шыв илмелли малтан пĕсăлнă пирки, станци поезда йышăнман пирки, поезда ăсатасси станци айăпне пула чарăнса тăнă пирки простойсемшĕн [illegible] уйăхри ĕçукçин 75 процентне, [illegible] çинче 100 процентне тÿлес.

6. Хăшпĕр чух поездной тата маневровăй бригадăсен ĕçукçи, вĕсен килмен сăлтавсене пула, вĕсен [illegible] пулнă чух поездной тата маневровăй бригадăсен ĕçукçине [illegible] гарантиллĕ виçи [illegible] пур çулсем çинче те çак постановлени 1-мĕш параграфĕпе пăхнă ĕçукçин ставкинчен 75 процент чухлĕ тÿлесе тăмалла.

Ĕçри хавхалану

КАНАШ. [illegible] колхозĕнчи [illegible]

— Хура [illegible] атте, пирĕн çулçуăмăр Сталин юлташ [illegible]

[illegible] «Динамо» колхоза [illegible] Сталин юлташ [illegible] Хĕрлĕ Çар [illegible]

[illegible] Халĕ «Динамо» колхоз [illegible] Егор Петров [illegible]

Т. ТУРХАН.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** Совет Союзĕн Геройĕ Петр Семенович Харитонов—разведчиксен взвочĕн командирĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет воинĕсен паттăрлăхĕпе çирĕплĕхĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, мартăн 13-мĕш. (ТАСС). Боевой йывăр задачăна пурнăçланă чухне капитан Мухамедьяровăн батальонĕ тăшман ункине кĕрсе ÿкнĕ. Боецсемпе командирсем каллех совет воинĕсен паттăрлăхĕпе çирĕплĕхне кăтартнă. Батальон хăйне пур енчен те çавăрса илнĕ тăшмана хирĕç ултă талăк хушши çапăçнă.

Нимĕçсен аллинче вăйлăн çирĕплетнĕ хирĕç тăмалли вырăнăн хăватлă огневой системи пулнă, вĕсен йышĕ пирĕннисенчен темиçе хут ытла пулнă.

Пирĕн боецсемпе командирсем самантлăха та пуçĕсене усман. Хăюллăн та паттăррăн вĕсем тăшман çине ыткăннă, темиçе хутчен штыклă атака тунă, тăшман çине гранатăсем вăркăнтарнă, нимĕçсен хĕçпăшалĕсене турта-турта илнĕ. Патронсем вĕçне çитсен, тăшманран тытса илнĕ пулеметсемпе автоматсене ĕçе янă.

Çав вăхăтра нимĕçсен инçетри тылĕнчен фашистсен çĕнĕ подразделенийĕсем килме тытăннă. Вара капитан Мухамедьяров хăюллă та оригиналлă решени йышăнать — уйрăм группăсене пайланса, çĕр пур çĕрте те пĕр-тикĕс маррипе усă курса, вĕтлĕх вăрман витĕр хăйĕн боецĕсене тăшман ункинчен илсе тухма шутлать. Нимĕçсем пулеметсемпе автоматсенчен пĕр тăтăш переççĕ, пирĕннисене хĕснĕçемĕн хĕсеççĕ. Анчах пирĕн паттăрсем нимĕç пуçкасакĕсен вăйлă атакисене пĕрин хыççăн теприне сире-сире пыраççĕ.

Тăватă талăк хушши пирĕн боецсем пĕр тумлам та шыв курмаççĕ, анчах кайран, шывне темиçе фляга тупсан, боецсем пĕри те шыв ĕçесшĕн пулман. Çав шывпа вĕсем хĕрнĕ пулеметсене сивĕтнĕ.

Пурин те пĕр шухăш, пĕр тĕллев пулнă — вĕсем епле те пулсан тăшмана ытларах сиен туса хăйсен чаçне таврăнасшăн пулнă. Улттăмĕш талăк иртнĕ тĕле лейтенант Цукс, старши лейтенант Таченко, кĕçĕн лейтенант Косенков юлташсем командир пулса ертсе пыракан уйрăм группăсем тăшманăн ункине çĕмĕрсе тухма тытăннă. Çав группăсем чакнине капитан Мухамедьяров юлнă ытти боецсемпе командирсемпе пĕрле хăй хÿтĕлесе тăнă, мĕнпур йывăрлăха вăл хăй çине илнĕ.

Уйрăм группăсем уйрăлса кайнине асăрхасан, нимĕçсем тăвăллăн пеме тытăннă. Тăшман пульлисенчен пытанса пирĕн тăватă боец пĕр çĕр пÿрте пырса кĕнĕ. Çав пÿрт патне 15 фашист пынă та пирĕн красноармеецсене парăнма сĕннĕ. Паттăр воинсем ответ парас вырăнне, сиксе тухнă та 8 фашистне çавăнтах штыксемпе тире-тире пăрахнă, ыттисем вара хăйсемех пăрахса тарнă. Çывăхрах старши лейтенант Лесняк винтовкăран персе нимĕçсен темиçе офицерне тата автоматчикĕсене пĕтерсе тăкнă.

Тăшмансем тем пек тăрăшсан та пирĕн боецсен çулне пÿлеймен. Капитан Мухамедьяров подразделенийĕнчи боецсем темиçе группăна уйрăлнă, пăшалран персе, штыкпа чиксе хăйсене валли ункăран тухмалăх çул тунă та хамăр чаçсемпе пĕрлешнĕ. Çав ултă кун хушши пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕç пехотин 2 батальонне тата противникăн чылай пемелли хатĕрĕсене пĕтерсе тăкнă.

А. ХАМАДАН.
М. ТУРОВСКИЙ.

Тăшман пысăк çухатусем тÿсет

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, мартăн 16-мĕш. (ТАСС). Пирĕн чаçсем пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех, тăшман вырнаçнă вырăна кĕрсе пыраççĕ. Кравцов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсем отлично çапăçаççĕ. Зазимко командир танкисчĕсенчен пулăшу илсе, вĕсем нимĕçсене хăвалаcа ярса, темиçе километра яхăн малалла куçнă. Противник хăйĕн япалисене те илсе каяйман. Пирĕн боецсем тăшманран юсавлă 13 миномет, 5 станковăй пулемет, япаласен складне тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

Эпир нихăçан та пуçсене усмăпăр

Эпир унпа вăрçă пуçлансан иккĕмĕш кунĕнче, 1941 çулти июнĕн 23-мĕшĕнче, тĕл пултăмăр. Çак тĕлпулу Мускаврах, çар эшелонĕсен формировани пунктĕнче пулса иртрĕ. Хĕрачасем кунта ирпе ирех чупса килчĕç. Тепĕр сехетренех вĕсене пысăк çуртăн пур этажĕсенче, пурăнакан çынсем те пĕлсе çитрĕç. Вĕсем пур çĕре те çитсе ĕлкĕреççĕ, пулăшу кирлĕ ĕçрен пĕринчен те айăкка тăрса юлмаççĕ. Вĕсем çамрăк боецсене петлицăсем çĕлесе параççĕ, грузовиксем çинчи шинельсемпе гимнастеркăсен тюкĕсене пушатаççĕ, буфетсенчи чашăк-тирĕксене çуса тасатаççĕ. Юлашкинчен вĕсене çавтериех шанакан пулчĕç, винтовкăсем валеçес ĕçе те вĕсене шанса пама тытăнчĕç.

Хăйсемпе пĕрле заводра ĕçленĕ юлташĕсене Хĕрлĕ Çара ăсатма Мытищăран сакăр хĕрача килчĕç, хăйсемпе пĕрле вĕсем бинтсемпе ваттăсем илсе килчĕç, çаксене вĕсем пурне те хăйсен укçисемпе илнĕ пулнă. Çавăнтах вĕсем пурте пĕр сасăпа хăйсем санитаркăсем пулма пултарни çинчен, эшелон тапранса кайиччен хăйсем çак çуртран ниçта та кайма шутламанни çинчен, эшелонпа пĕрле хăйсем те фронта кайма шутлани çинчен пĕлтерчĕç. Сакăрпа пĕрлех вĕсем хăйсене кунта тыла никам та хăварма пултараймасси çинчен те, хăйсене тăратса хăварни тивĕçсĕр ĕç пулса тăни çинчен те каласа пачĕç.

Портянкăсем касакан пÿлĕмре хăйне йĕри-таврах хĕрачасем хупăрласа илсе тĕрлĕ сасăсемпе калаçма тытăнсан, çарти политрук пĕр хушă нимĕн калама та аптăраса тăчĕ. Унтан вăл хăйне алла илчĕ те çапла каларĕ:

— Хĕрсем, эсир ăссăр çынсем евĕрлех аппаланатăр, эсир кунта та кирлĕ пулатăр. Сире эпĕ ака мĕн хушатăп: эсир пире ăсатма пыратăр. Хăвăрах куратăр, манăн ĕçсем питех те нумай. Çула илемлĕн тапранса тухмалла пултăр тесе эсир вагонсем çине плакатсем çыпăçтарса тухăр-ха. Килĕшетĕр-и манпа? Манăн çăвăнмалла-ччĕ, эсир мана сахалтан та вунă минута хушши тытса тăтăр. Çуркуннехи вăхăта çапла усăр ирттермелле-и-ха вара?

Савăннă хĕрачасем самантрах:

— Пирĕн парикмахерпа та пур! Боецсене таплаcа та кăтартма пултаратпăр: акă Галочкинăнах илĕпĕр, вăл балетнăй шкулта вĕреннĕ,—тесе пĕлтерчĕç.

Çул çине тапрансан та вĕсем каллех хăйсен сăмахнех калама тытăнчĕç:

— Пире эшелонпа пĕрле фронта ярăр! Эпир боецсене иленсех çитрĕмĕр. Вĕсем те пире пурне те палласа çитрĕç, пирĕн бинт та, ваттă та пур. Эпир епле-ха тыла юлма пултарăпăр? Эпир дисциплинăна та хăнăхса çитрĕмĕр, малтанхи пулăшу та пама пĕлетпĕр. Юлташ старши политрук, эсир унта пирĕнсĕр пĕтме те пултаратăр. Тĕрĕс мар-и-ха ĕнтĕ, старши политрук,—тесе йăлăнаççĕ вĕсем.

Çакă вăл вăрçă пуçламĕшĕнчех пулса иртрĕ. Вăл вăхăтра хĕрачасем малтанлăха кăна çапла йăлăнаççĕ, кайрахпа вĕсем канлĕ те лайăх пурнăçран йывăр ĕçе кайнине хăйсемех тавçăрса илме пултарĕç тесе шутлама та май пурччĕ. Нумайĕшĕ ун чухне çаплах шухăшлатчĕç.

Акă, вăрçă пуçланнăранпа сакăр уйăх иртрĕ. Фронтра пулнă кашни красноармеецпа командирах халĕ пирĕн çĕршыври хĕрарăмсемпе хĕрачасем йывăр пулсан та, хăйсен сăмахĕсене пурнăçланине аванах пĕлсе тăраççĕ. Çар эшелонĕсен формировани пунктĕнче июнĕн 23-мĕшĕнче тĕл пулнă хĕрачасене эпир халĕ çапăçу пыракан пур фронтсенче те, пур вырăнсенче те çĕнĕрен куратпăр. Вĕсене эпир госпитальсенче кăна мар, дивизи хаçачĕн редакцийĕсенче те, полк штабĕсенче те, çапăçу хĕрсех пыракан вырăнсенче те тĕл пулатпăр. Вĕсем тăшманăн тылне кĕрсе партизансем патне те çитеççĕ, шанчăклă алăпа хăюллă чĕре кирлĕ вырăнсенче пур çĕрте те вĕсене тĕл пулма пулать.

Йывăр уйăхсем те пулчĕç. Арçынсене те çирĕп нервсем кирлĕ пулчĕç. Тăшман Минска, Могилева, Смоленска тытса илчĕ.. Тăшман кĕтмен çĕртенех ултавлăн килсе çапнипе чĕрене ыраттарсах чакмалла пулчĕ. Кашни утăмрах çапăçса ерипен чакакан çынсене тăшманăн юнкерсĕсем пулеметсенчен шатăртаттаратчĕç. Июль уйăхĕн пăчă кунĕсенче пайтах ачасен юнĕсем юхрĕç, вĕсене кура пайтах çынсен чĕрисем ыратса куçĕсем куççулĕсемпе тулса ларчĕç. Çакна Хĕрлĕ Çар нихăçан та манмĕ. Çав вăхăтра та Хĕрлĕ Çарпа пĕрле хĕрарăмсемпе хĕрачасем чылай пулчĕç, вĕсем пур йывăрлăхсене те ыттисемпе пĕрех çирĕппĕн тÿссе ирттерчĕç.

Тăшмана çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе ыттисем евĕрлех хăйсен пурнăçне те шеллемен хĕрачасем ун чухне мĕн çинчен шухăшланă-ши? Акă пĕр тĕслĕх илĕпĕр. Артиллеристсем патне нимĕçсем йышăннă ялтан пĕр хĕрача пычĕ. Вăл пычĕ те: «Авă çурт ларать, вăл куштан аванах курăнать. Унта нимĕçсен штабĕ тăрать. Çав çурт çинелле перĕр!»—терĕ.

Унран вара: «Эсĕ мĕнле майпа çавтериех аван пĕлетĕн-ха?»—тесе ыйтрĕç.

Вăл тÿрех çапла каларĕ: «Вăл çуртра тахçан эпĕ пурăннăччĕ. Вăл çурта ман анне юлнă».

— Аннÿ халĕ те унтах-и?—тесе ыйтрĕç унран.

— Нимĕн те пĕлместĕп. Анчах унта нимĕçсен штабĕ тăрать. Вĕсен штабне аркатса тăкăр! Çавăнпа пемех ыйтатăп!—тесе тархаслать вăл.

Анчах çак хĕрачан амăшĕ вăл çуртран тухса кайнине кайманнине пĕлмесĕр артиллеристсем пеме килĕшмерĕç. Вĕсем çак самантра тăван çĕршывшăн хĕрача пурне те тума хатĕррине аванах ăнланса илчĕç.

Çар чаçĕсемпе пĕрле хĕрарăмсем те тăшман ункинче пулса курнă. Вĕсем, пиклленсе ÿкмесĕр, боецсемпе танах çапăçса, тăшман ункисенчен те çĕмĕрсе тухнă. Хĕрарăмсем тăшман тыткăнĕнчен те нумай тарса тухнă.

Гжатск патĕнче эпĕ çавăн пек хĕрарăмсенчен пĕрине тĕл пултăм. Нумаях пулмасть тыткăна илнĕ боецсемпе пĕрле ăна та нимĕçсем винтовкăсемпе хуралласа пынă. Çĕрле канма чарăнсан вăл кăвайт патĕнче айккинелле пăрăнса тĕттĕмелле кĕрсе çухалнă. Çапла ăна тарма тÿр килнĕ. Нимĕçсен инçетри тылĕнчен вăл вăрмансемпе уйхирсем тăрăх виçĕ эрне хушши çулсăр-мĕнсĕр утса тухнă. Кĕрхи сивĕ çĕр тăрăх вăл çарранах утнă. Унăн урисем шăнса шыçăнсах çитнĕ. Хушăран вăл чĕркуçленсе ларнă, калрах кайнипе сивĕ çĕр çинех тăсăла-тăсăла ÿкнĕ, çывăрса вăранса тăнă кĕрсен, вăл каллех малалла утнă. Фронт патне çывхарса пынă чухне малтанхи юр çунă. Юнланса йĕпеннĕ ури унăн шăнса пăрланса ларнă. Нумайĕшĕ çак виçĕ эрнене тăсăлнă йывăрлăха тÿссе ирттерейĕмен пулĕччĕ, анчах вăл нимĕн умĕнче те чарăнса тăман—малаллах шунă. Красноармеецсем ăна фронтăн малти линийĕнчех тупнă. Вĕсем ăна алă çинче йăтса землянкăна илсе кĕрсе вут патне вырттарнă. Вăл вĕçĕмсĕр: «Киле çитрĕм, киле çитрĕм», тенĕ. Тăван килĕпе тăван çĕршывĕ уншăн çавтериех хаклă.

Халĕ вахтăсем улшăнсах пыраççĕ. Эпир малаллах кĕрсе пыратпăр. Тăшмана хĕссе малаллах каякан полксемпе батальонсенче хĕрарăм-санитаркăсемпе связисткăсем, боецсен шанчăклă тусĕсем пыраççĕ. Çĕнтерÿ савăнăçĕпе вĕсем те чунĕпе хавхаланĕç!.

ЕВГЕНИЙ КРИГЕР.
(«Известия»)

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** пирĕн боецсем Д. ялĕ районĕнчи участоксенчен пĕринче тыткăна илнĕ нимĕçсен ушкăнĕ. Çĕрле ял çине сасартăк пырса тапăнса, пирĕн боецсем нимĕçсене ăшă пÿртсенчен хире хăваласа кăларнă, тыткăна парăнманнисене тыткăна илнĕ. Ялтан хăвăртрах тухса тарма васканипе фашистла вояксем шинелĕсене тăхăнма та ĕлкĕреймен.

К. ЛИШКО фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ÇУРÇĔРТИ ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. **Укерчĕк çинче:** охотник-катер çинчи краснофлотец-комсомолецсем В. Мечелевпа В. Терещенков катера тапăнма тăнă фашистла самолетсем çине пераççĕ.

Е. ХАЛДЕЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ирĕке кăларнă ялсенче

«Бандитсем, тискер кайăксем, вăрă-хурахсем, çынçиенсем, этемлĕхĕн каяшĕсем...» Çапла хак параççĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă ялсенчи хресченсем. Нимĕç оккупанчĕсем совет хресченĕсене чуралăх, пусмăрлăх, выçлăх, асаплăх кÿнисĕр пуçне урăх нимĕн те пама пултарайманнине, фашистсем совет халăхĕн чи усал та тискер тăшманĕсем пулнине кам пĕлмест халь ĕнтĕ?! Нимĕç оккупанчĕсем пирĕн совет хресченĕсенчен мăшкăлланине тÿссе курнă колхозниксемпе калаçсан, çуртĕрсĕр, тумтирсĕр, выçă тăрса юлнă хресченсене курсан, фашистсене вĕсен юнлă преступленийĕсемшĕн мĕнле ответ тыттармалли виçене те тупаймăн. Вĕсем валли этемлĕхĕн пĕртен-пĕр приговор кăна—вилĕм, асаплă вилĕм приговорĕ пулмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă воинĕсем, Сталин юлташ кăтартăвне пурнăçласа пырса нимĕç оккупанчĕсене çĕршерĕн, пиншерĕн пĕтерсе тăкнине илтсен тата чеченекен совет территорийĕнче вĕлерсе тăкнă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене курсан, пирĕн воинсен, красноармеецсемпе командирсен тата политработниксен çапăçури паттăрлăхĕ хĕрÿленет, шухăш-кăмăлĕ çĕкленет. Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм! Вĕсене нимĕн хĕрхенни те пулмалла мар!

Çак çырура эпир нимĕç оккупанчĕсем Ленинград облаçĕнчи Сивушино ялĕнче тунă бандитла преступленисем çинчен каласа парасшăн. Çак ялти колхозниксем темиçе уйăх хушши хĕнхур-асап, нуша тÿссе курнă, халĕ тин вĕсем уçăн, кăкăр тулли сывлама пуçларĕç. Вĕсем чăн каласа пани пирĕн совет гражданĕсен чĕрисенче фашистла бандитсене курайманнине татах та ытларах ÿстерет. Çак курайманлăх тăван совет çĕршывĕшĕн, хамăрăн колхозсемшĕн, совхозсемшĕн, фабрикăсемпе заводсемшĕн—тар юхтарса тунă пурлăхшăн, тăван çĕршыв чысĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешес хастарлăха вăйлатать. Акă мĕн каласа параççĕ нимĕçсен тискерлĕхне курнă хресченсем.

«Çав асаплă кунсене эпĕ чăсах манас çук. Вĕсене халĕ те текех тĕлĕкре куратăп. Пирĕн яла килсе кĕрсенех, фашистсем мĕнпур колхозниксене пуçтарчĕç те, пирĕн куç умĕнчех, вăрманта тытнă пĕр колхозника çакса вĕлерчĕç...»

«Пыйтлă немчура пире пăлтах антратса çитерчĕ,—тет Петрова колхозница,—пĕр татăк çăкăрсăр тăратса хăварчĕç, пахчари çĕрулмине кăларса çисе ячĕç. Алла мĕн лекет—çавна илчĕç; пир-авăр, чашăк-тирĕк таврашĕсене те хăвармарĕç. Чердак çинче кивĕ калуш тупрĕç те ăна та илсе кайрĕç. Ачасен вылямалли япалисене те хăвармарĕç»,—тесе пĕлтерет Петрова колхозница.

«Эпĕ 60 çулта,—тесе пуçлать хăйĕн сăмахне Шубанов колхозник.—Эпĕ белогвардеецсен тискерлĕхне те тÿссе курнă, анчах та нимĕç фашисчĕсем белогвардеецсенчен те нумай иртсе каяççĕ. Ман килте 20 нимĕç пурăнчĕ. Пĕтĕм пÿрт-çурта варласа пĕтерчĕç. Пирĕн ялта кашни колхозникĕн пылхурчĕсем пурччĕ, халĕ вĕсем пĕри те çук, йăлтах фашистла вăрă-хурахсем çимĕрсе пĕтерчĕç».

Цветков старикĕн пĕр ывăлĕ партизан, тепĕр ывăлĕ Хĕрлĕ Çар лейтенанчĕ пулнă. Вĕсене, карчăкĕпе иккĕшне тата 12 çулхи внукне фашистсем хăйсен пÿртĕнчен хăваласа кăларнă та тĕттĕм мунчана хупнă. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем наступлени пуçласан, фашистсем çакă нимĕн айăпсăр виçĕ çынна мунчаран пÿрте илсе кĕнĕ, алăкне, чÿречисене хăмапа çапса лартнă та, пÿртне вут чĕртсе янă. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем хăвăрт çитсе кĕни çеç Цветковсен ялне тата Совет Союзĕн виçĕ гражданинĕн пурнăçне çăлса хăварнă.

Политрук Р. ШАШКОВ.
Действующи арми.

МТС политотделĕсен ĕçĕнчи малтанхи утăмсем

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă уяв кунĕнче кăларнă хăйĕн приказĕнче пирĕн фронта пулăшас ĕç пĕр минутлăха та вăйсăрланмалла мар тесе кăтартса панă. Халăх та тискер тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма ялхуçалăх работникĕсен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, çĕршывпа фронт валли тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, чĕртавар нумайрах та нумайрах туса памалла.

Çак задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре МТС-сен тата совхозсен политотделĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Политикăллă, организаторла тата массăллă ĕçе анлăн туса пырса, пĕтĕм колхозсене, машинно-тракторнăй станцисене ялхуçалăх ĕçĕнчи задачăсене вăхăтра пурнăçлама мобилизацилемелле.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре çуракине кĕске срокра тата агротехникăллă мероприятисене пурне те пăхăнса ирттерни чи кирлĕ услови пулса тăрать. Кăна кашни колхозникпе колхозницăн, ялхуçалăх ĕçĕнчи кашни работникăн ăнланмалла, çуракине тухма халех хатĕрленмелле. Калинин юлташ хăйĕн «Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем çинчен» ятлă статйинче çуракине хатĕрленес, ăна пысăк пахалăхпа ирттерес ĕç халыхи вăхăтра мĕнле вырăн йышăннине кăтартса çапла çырать: «Халĕ, 1942 çулта, вăрçă пуçланнăранпа тăххăрмĕш уйăха кĕнĕ вăхăтра, пирĕн çĕршыври тĕрлĕ ĕçсене илсе хакласа пăхсассăн, çуркуннехи уйхир ĕçĕсене пĕрремĕш черетре тăракан ĕçсем тесе шутламалла. Боеприпассемпе хĕçпăшал туса кăларакан производствăна çеç унпала танлаштарма пулать. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсен йывăрăшĕ, тĕпрен илсен, колхозниксем çине тиенни май тата çав ĕçсем промышленносри ĕçсемпе пĕр виçерех тăнă май, колхозниксемпе колхозницăсем фронтăн малти позицийĕсенчи вырăнсене йышăнчĕç теме пулать. Ялхуçалăх ĕçĕсенче прорыв пулни вăрçă фрончĕн участокĕсенчен пĕринче ĕçсем ăнăçсăр пулнинчен кая мар пулнă пулĕттĕ».

Çуркуннехи уйхир ĕçĕсене çакăн пек хакласа, ĕçе тимлĕн тытăнмалла. Пирĕн халĕ ялхуçалăх ĕçĕнчи чылай работниксем çакна ăнланмаççĕ-ха. Çакăн пек тăвас пулать: кашни колхозник, колхозница çуракине хатĕрленес ĕçе чыслăн тутăр, вăл ĕç халĕ питех те пысăк вырăн йышăннине пĕлсе тăтăр, вăл ĕçе ăнăçлăн тунинчен тăшмана пĕтерсе тăкса çĕнтерӳ тăвас ĕç килнине ăнлантăр.

Пур ĕçĕн ăнăçлăхне те кадрсем татса параççĕ. МТС политотделĕсен тĕп ĕçĕ вăл — çынсемпе ĕçлесси пулса тăрать. Политотделсен колхозсене ертсе пырас ĕçри кадрсене суйласа илме, уйрăмах председательсене, бригадирсене уйăрса лартма, механизаторла кадрсене хатĕрлеме, колхозăн вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухма пулăшмалла. Вĕсем ялхуçалăх ĕçĕнчи работниксене куллен воспитани парса тăмалла, ку тĕлĕшпе пуринчен малтан колхозсене ертсе пыракан кадрсене ĕçе вĕрентмелле. Ĕç çине тӳрĕ кăмăлпа пăхма, хăйсен ĕçне тӳррĕн туса пыма, колхозсемпе МТС-сен хуçалăхне йĕркере тытса тăма, ĕçре дисциплинăллă пулма вĕрентмелле. Вĕсен ĕçри çитменлĕхсене хирĕç кĕрешес кăмăлне çĕклемелле, хăйсен ĕçĕсемшĕн вĕсем çĕршывпа фронт умĕнче ответ тытнине ăнлантармалла.

Политотделсем çак тĕп задачăсене тĕрĕс ăнланаççĕ. Малтанхи кунсенчех вĕсем механизаторла кадрсем хатĕрлес ĕçе тума тытăнчĕç. Çапла, Элĕкри МТС политотделĕ хăй ĕçе тытăннă чух МТС çумĕнчи трактористсен курсĕнче 41 çын çеç вĕреннине курсан, механизаторла кадрсем мĕн чухлĕ кирлине тепĕр хут пăхса тухрĕ. Курсра вĕренекен çынсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерме çителĕксĕррине кăтартса панă. Политотдел ытларах хĕрачасемпе хĕрарăмсене пухса татах тепĕр группа организацилерĕ. Халĕ Элĕк МТС çумĕнчи курсра трактор ĕçне 74 çын вĕренеççĕ. Куславккари МТС политотделĕ трактористсем хатĕрлекен курсран 41 çынна вĕрентсе кăларнă хыççăн тата тепĕр 40 çынна вĕрентме тытăнчĕ. Ку МТС кăçал 55 тракторист хатĕрлес вырăнне 81 тракторист вĕрентсе кăларать. Елчĕкри МТС политотделĕ те, кăçалхи ĕçсен калăпăшне тĕплĕн пăхса тухнă хыççăн, 182 çынна тракторпа ĕçлеме вĕрентет. Ишлей МТС-ĕнчи трактористсен курсĕнче 55 çын вырăнне 98 çын вĕренет. Политотделсем ĕçе тытăннинчен трактористсем хатĕрлекен курссенче республикăра пурĕ 700 çын вĕреннĕ пулсан, паянхи куна вăл курссенче 1.481 çын вĕренет тата 300 çын вĕренме пухăнаççĕ. Трактористсем вĕрентсе хатĕрлес плана республикăра ытлашшипех тултарнă пулсан та, хăшпĕр районсенчи машинно-тракторнăй станцисем трактористсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Красноармейски, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр станцисем трактористсем хатĕрлекен курссене тата ытти шкулсене çителĕклĕ таран çын пухайман, кадрсем хатĕрлес ĕçе япăх туса пыраççĕ.

Механизаторла кадрсене вĕрентсе хатĕрленипе пĕрлех, МТС политотделĕсем тĕрлĕрен курссенче массăллă квалификациллĕ кадрсем хатĕрлеççĕ, колхоз председателĕсене вĕрентсе пыраççĕ, колхозсенче тата машинно-тракторнăй станцисенче политикăллă-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз колхозникĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн республикăри колхозсенче производствăллă тата политикăллă активлăх çĕкĕрен вăйланчĕ. Колхозсем çуракине лайăх хатĕрленсе кăçал татах та вăйлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешĕве тухрĕç, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Чкаловски МТС политотделĕ Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен çырăвне МТС ĕçлекен колхозсенче пуринче те сӳтсе-явнă. Çавна пула кăçалхи вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртăва 27 колхоз, 36 бригада тата 34 звено хутшăннă. Канашри МТС ĕçлекен вырăнсенче социализмлă ăмăртăва 35 колхоз, Елчĕк МТС ĕçлекен вырăнсенче 41 колхоз хутшăнчĕç.

Нумай колхозсем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илсе вĕсене пурнăçлассишĕн хастарлăн кĕрешме тытăнчĕç. Çапла, Чкаловски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз «Путь Ленина» колхозпа социализмлă ăмăртăва тухнă. Икĕ колхоз те çуракине хатĕрленес ĕçе пысăк çĕкленӳпе туса пыраççĕ. Вăрлăхлăх тырăсене сортлама ыхăрнăлĕх организацилерĕç, халĕ ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене юсаса пĕтереççĕ, вырăнти удобренисене пухасси, вĕсене хире кăларасси ăнăçлă пулса пырать. Районри «Маяк», «Кзыл-Тан», Сталин ячĕпе тăракан, «РОКК» тата ытти колхозсем те лайăх ĕçлесе пыраççĕ.

Шăхасан районĕнчи «Красный луч» колхоз Кольцовка колхозăн членĕсен çырăвне сӳтсе-явиччен çуракине хатĕрленме тытăнман пулнă. Çырăва сӳтсе-явнă хыççăн çывăхри колхозпа социализмлă ăмăрту договорĕ турĕç. «Красный луч» колхоз хăйĕн çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлама хĕрӳллĕн тытăнчĕ. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă уяв тĕлне колхоз вăрлăхлăх тырăсене пурне те сортласа хучĕ, плугсене пурне те ремонтласа, тасатса хучĕ, выльăх картишĕсенче, лаша витисенче кирлĕ йĕркелĕх турĕ, лашасене çуракине хатĕрлес ĕç нумай лайăхланчĕ.

Политотделсем машинно-тракторнăй станцисенче йĕркелĕхпе çирĕп дисциплина тăвассишĕн нумай ĕçлеççĕ. Вĕсенчи парторганизацисен, комсомол организацисен ĕçĕ çĕкленсе пырать. Нумай МТС-сенче иртнĕ вăхăтсенче парторганизацисен пухăвĕсем уйăхĕпе пулса иртмен пулсан, халĕ вĕсем хăй вăхăтĕнче пулса иртеççĕ, пухусене лайăх хатĕрленсе, тĕплĕн ирттереççĕ. Ку вара коммунистсен ĕçри активлăхне пысăккĕн ӳстерчĕ.

Элĕк районĕнчи МТС политотделĕ хăй ĕçлеме пуçланăранпа коммунистсен уçă пухăвне виçĕ хут тата пĕр хут хупă пуху туса ирттерчĕ. Вăл пухусенче, ытти ыйтусемпе пĕрле, уйрăм коммунистсем партин поручениййĕсене тата производствăллă заданисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен отчетсем итлене. Çакă вара коммунистсен тата ытти работниксен ĕçри ответлăхне çĕклерĕ. Халĕ кунта кашни коммунист парторганизаци хушнă ĕçе ответлăха туйса пурнăçласа пырать, ăна лайăхрах пурнăçлассишĕн тăрăшать.

Политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пынине пула ремонт ĕçĕнче ĕçлекен рабочисем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç, вĕсем кулленхи ĕç нормине ирттерсе тултарассишĕн, тракторсене юсас плана срокчен ирттерсе пурнăçлассишĕн тата вăл ĕçе пысăк пахалăхпа тăвассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Шăхасан районĕнчи МТС-ра юлашки вăхăтра ĕç тухăçлăхĕ чылаях хăпарчĕ, дисциплина çирĕпленчĕ. Ремонтри нумай рабочисем хăйсен ĕç нормине ирттерсе пурнăçлама тытăнчĕç. Мастерскойсенче йĕркелĕх кӳнĕ, рабочисем ĕç вырăнĕсене таса тытса тăраççĕ.

Политотделсем машинно-тракторнăй станцисен ĕçне чĕрĕ вăй илсе кĕчĕç, пĕтĕм ĕçе çĕклесе вăйлатрĕç. Ĕçре оперативлă ертсе пырасси, МТС ĕçлекен колхозсен ĕçне тимлĕн хутшăнса пулăшса тăрасси политотделăн ĕç стилĕ пулса тăрать. Пăрачкав районĕнчи «Передовик» колхозра авăн çапас ĕç ăнăçлăн пыман. МТС-ăн «МК-1100» маркăллă молотилки, ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулнă пулсан та, талăкра 4—5 тонна çеç çапса кăларнă. Политотдел работникĕсем колхозниксемпе калаçусем ирттернĕ хыççăн, авăн çапнă çĕрте ĕç вăйне урăхла вырнаçтарнă хыççăн çав молотилкăпах талăкне 10—12 тонна тĕштырă çапса кăларма пуçланă. Сталин ячĕпе тăракан колхозра çапса хунă тырă темиçе кун хушши итем çинчи сарай айĕнче сăвăрмасăр выртнă, темиçе тонна тĕштырă кӳрсе кĕме ĕлкĕреймесĕр çĕркаçа уя юлнă. Политотдел работникĕсем колхоз активне пухса çак прорыва пĕтерме сĕннĕ. Çавăнтах уйри итем çинчен çапнă тырра колхоз сарайĕсене турттарса кĕме колхозниксене мобилизациленĕ. Темиçе сехет хушшинче колхозниксем уйри тырра йăлтах турттарса кĕнĕ, сарайсенчех ăна сăвăрассине те организациленĕ. Йĕпреç районĕнчи «Красный металлист» колхозра вăрлăхлăх тырăсене сортламан пулнă, ялхуçалăх машинисем, вăхăтра пуçтарса лартман пирки, юр айне пулсаларнă. Выльăх-чĕрлĕх кĕçĕ чирĕпе аптăрама тытăннă. Кун çинчен пĕлнĕ хыççăн политотдел работникĕсем вырăна тухса колхоз активне пухнă, колхозниксемпе каланă. Колхозниксем тепĕр куннех вăрлăхлăх уйăрнă тырăсене сортлама тытăннă, ялхуçалăх машинисене юр айĕнчен кăларнă, юсама тытăннă, выльăх-чĕрлĕхе кĕçĕ чирĕнчен сыватма тытăннă.

Çакăн пек примерсене татах илсе кăтартма пулать, анчах вĕсем политотделсен ĕçĕнчи малтанхи утăмсем çеç-ха. Политотделсен татах та пысăк ĕçсем туса ирттермелле пулать. Вĕсен хăйсем тавра ялсенчи малта пыракан çынсене явăçтармалла, вĕсене партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем тавра пĕтĕçтерсе, вĕсем пулăшнипе пĕтĕм колхозниксен массине, машинно-тракторнăй станцисенчи рабочисене çĕршывпа фронт заданине пурнăçлама мобилизацилемелле, çĕршывпа фронта нумайрах тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, чĕртавар туса памалла.

Пирĕн ялхуçалăх халĕ вăрçă условисенчи пĕрремĕш çураки кампанийĕ умĕнче тăрать. Анчах та уйрăм районсенче тата машинно-тракторнăй станцисенче çуркуннехи ĕçсене тума хатĕрленесси начар пырать-ха. Хăшпĕр МТС-сен тата колхозсен руководителĕсем хăйсен ĕçне вăрçă обстановки ыйтнă пек туса пымаççĕ-ха. Машинăсемпе тракторсене юсас ĕçре Çĕрпӳ, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Первомайски тата Етĕрне районĕсенчи машинно-тракторнăй станцисем кая юлса пыраççĕ, ку МТС-сен директорĕсем ĕçе пуçарулăх кăтартса ĕçлемеççĕ, политотдел работникĕсем те вĕсене çителĕклĕ таран пулăшса пымаççĕ. Тракторсене юсас тĕлĕшпе пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕсленĕ хыççăн çакă курăнчĕ: уйрăм МТС-сенче тракторсене пахалăхлăн юсаман, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ, Вăрмар районĕсенчи МТС-сен директорĕсем тракторсене юсанă хыççăн йышăнас ĕçе ячĕшĕн çеç тăваççĕ, тракторсен юсавлăхне тĕрĕслемеççĕ. Çакна пула ремонтран тухнă тракторсем час-часах ĕçе юрăхсăр пулаççĕ, вĕсенче хăшпĕр чăссем çитменни палăрать. Тракторсене юсас тĕлĕшпе ĕç тăвас вырăнне сӳпĕлтетсе ларса улталас çул çине тăнăшăн ВКП(б) Чăваш Обкомĕ Сĕнтĕр МТС-ĕн директорне Филиппова ĕçрен кăларчĕ, ăна çав МТС-рах участокри агроном пулса ĕçлеме лартрĕ. Çакăнтан МТС директорĕсен тата политотдел начальникĕсен хăйсен ĕçĕнче тивĕçлĕ вывод тумалла, машинăсемпе тракторсене юсас ĕçри кăлтăксене нимĕн тăхтамасăр пĕтермелле, юсанă тракторсене тата тепĕр хут пăхса тухмалла, вĕсем ĕçе тухма юрăхлипе юрăхсăррине тĕрĕслемелле, кашни трактора лайăх юсаса çитерсе, кăçал пĕр чăрăнусăр ĕçлемелле тумалла.

Çитес çураки политотдел работникĕсемшĕн боевой экзамен пулса тăрать, вăл партипе правительство шанса панă ĕçе вĕсем епле пурнăçласа пынине тĕрĕслекен вăхăт пулать. Тракторсене çуракине тухма лайăх хатĕрлесе çитернипе пĕрлех, политотдел работникĕсем колхозсенче вăрлăхлăх хатĕрлес, ĕç планĕсем тăвас, туртăм вăйне, хăмăт пăявсене хатĕрлес ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла, бригадăсемпе звеносене организацилесе çирĕплетмелле. Çак ыйтусем политотделсен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнса тăмалла.

Политотделсен МТС рабочийĕсемпе служащийĕсем тата колхозниксемпе колхозницăсем хушшинчи политикăллă ĕçе нумай вăйлатмалла. Политикăллă-массăллă ĕçĕн пур меточĕсемпе те усă курмалла. Хаçатсем вуласси̇не организацилемелле, юлашки хыпарсен витринисене тумалла, радиопа, кинопередвижкăсемпе анлăн усă курмалла, кашни бригадăрах боевой листоксемпе стена хаçачĕсем кăлармалла тата ыттисем те. Кашни трактор бригади валлиех агитаторсем халех уйăрса хумалла, боевой листоксемпе стена хаçачĕсен редакторĕсене уйăрмалла, вĕсем колхозсен уйхир бригадисем валли те кирлĕ пулаççĕ. Çак ĕçре ĕçлеме палăртнă çынсемпе инструкциллĕ канашлусем туса ирттермелле, вĕсене халĕ куллен пулса пыракан агитациллĕ ĕçе активлăн хутшăнтармалла.

Нумай машинно-тракторнăй станцисем 1942 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерессишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕç те ĕнтĕ. Пăрачкав, Кувакино, Чкаловски, Елчĕк, Ишлей, Сĕнтĕр, Вăрнар, Йĕпреç тата ытти хăшпĕр районсенчи машинно-тракторнăй станцисем социализмлă ăмăртăва тухса хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Вĕсем 15 лаша вăйлă кашни тракторпа кăçал 550 гектар ĕçлеме, горючине 5 процент таран перекетлеме, трактор ĕçĕн хăйне ларакан хакне 3 процент йӳнетме пулчĕç. Трактор бригадисем, колхозсем, колхозсенчи бригадăсемпе звеносем хушшинче те социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Çак ăмăртăва ертсе пырасси, малта пыракансен опытне ыттисене ăнлантарса парса стахановла движение сарса пырасси — политотделсен чыслă задачи пулса тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕнчи пуçарулла работниксен паха ĕçĕсене сарса, çĕклесе пынипе пĕрлех, кахал тата тирпейсĕр çынсене, хăйсен сӳрĕк ĕçĕпе тăшмана пулăшакансене хирĕç политотделсен вирлĕн кĕрешмелле.

Политотделсен МТС директорĕн авторитетне пур енĕпе те çĕклесе пымалла, унăн единоначалине çирĕп тытса тăмалла, хăйсен ĕçне ВКП(б) тата ВЛКСМ райкомĕсемпе çирĕппĕн çыхăнтарса пымалла. Çавăн чухне çеç вĕсем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама пултарĕç.

МТС политотделĕсен ĕçне сăмах тăрăх мар, конкретлă ĕç тăрăх хаклаççĕ, вĕсем çуракине хатĕрленсе ирттерес ĕçе мĕн таран ăнăçлăн туни тăрăх, партипе правительство тата аслă Сталин вĕсем умне лартнă заданине—фронтпа çĕршыва кирлĕ апат-çимĕç продукчĕсене тата чĕртавара çителĕклĕ таран парса тăни тăрăх хаклаççĕ. Çакна пирĕн яланах асра тытас пулать.

В. ЧЕРНОВ.

Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн политсектор начальникĕ.

Çурхи кун çулталăка тăрантарать

1. КОЛХОЗ ЛАШИ ТАТА ĂНА ПАХАКАНСЕМ

«Комбинат» колхозăра пĕр лашана уйăх каярах сутăн илнĕ. Ун чухне вăл урисем çинче те аран-аран тăнă. Уйăх хушшинче çавтери начар лаша лайăх хуçа аллинче çил пек çӳрекен пулнă. Шăп çав вăхăт хушшинчех Хутар колхозĕнче пĕр тĕреклĕ лаша ӳпаран ӳкет.

— Лаша мар кунта, эпир хамăр, конюхсем айăплă. Ĕнер-ха вăл, Яковов Иван ир-ирех лаша кӳлсе кайрĕ те паян каçхине тин таврăнчĕ. Талăк çурă лаша апат мар, пĕр тумлам шыв та курман.

Ку сăмахсене ватă конюх—Иван Никифорович калать. Çĕмĕрле районĕнчи хăшпĕр колхозсенче ку ĕнтĕ чăн та çапларах—колхоз лаши кунта хисепре мар, ăна вăхăтра тата çителĕклĕ çитерсе шăвармаççĕ çеç мар, час-часах апатсăр, шывсăр хăлхкăлтараççĕ, ытлашши хăваласа, çапса пăсаççĕ, суранлатаççĕ. Районри чылай колхозсенче лашана Яковов пек тыткаланă тĕслĕхсене курма пулать. Хутар колхозĕнчех çак иртнĕ уйăхра вăрмана пĕр лаша ӳксе вилет, çав вăхăтрах Ф. Савельев кӳршĕ ялне хăй ирĕкĕпех лаша кӳлсе кайса вăрçса çӳрет, унăн лашине икĕ çĕртен çĕçĕпе чиксе суранлатаççĕ. Колхозăн пĕлтĕрхипе виçĕмçулхи лашасем чылай. Вĕсем пурте чирлĕ, пурте вăйсăр, начар.

Саватер ялĕнчи колхоз хăйĕн лашисем валли вите 1935 çултах тума тытăннă. Ăна туса пĕтерни те ĕнтĕ, çине витсе ăшне юсаса çеç çитермелле. Тимлĕн тытăнсан, ăна ик-виçĕ эрнерех туса пĕтерме пулать. Çапах та колхоз лашисене каçсерен пĕчĕк витесене хупаççĕ, кăнтăрла вĕсене витесем умне ерĕхе кăларса ярса хăрăк çулăм çинче тăратаççĕ. Лашасем тапăçаççĕ, пĕр-пĕрне сыртса суранлаççĕ. Лашисем те, тихисем те начар. Тихисем тата чирлеççĕ, вĕсенчен пĕри нумай пулмасть вилнĕ. Хăçан вĕренсе çитĕç-ши кунта лашасене пăхма?

2. ÇАВТЕРИ АВАН ШУХĂШСЕМПЕ ПАРХАТАРЛĂ ĔÇСЕМ

Эскетенри «Новая жизнь» колхоз председателĕ Ф. Матвеев умĕнче цифрăсем. Кăçал колхозăн пурĕ 500 гектар тĕрлĕ культурăсем акса хăвармалла. Колхозăн кăçал çĕрулми иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах—пурĕ 50 гектар лартса хăвармалла, 7 гектар çинче тĕрлĕ пахча-çимĕçсем туса илмелле. Тĕштырă вăрлăхĕсем çитеççĕ, çĕрулми вăрлăхĕ вара çурри çитмест, пахча-çимĕç вăрлăхĕсем те халлĕхе çук-ха. Çапах та председатель ку ытлашши хăрамасть. Çĕрулми вăрлăхне çĕрулми тĕприсене касса та çитерме пулать.

— Анчах колхозра никам та вĕсене касма тытăнман пĕт-ха. Пахча-çимĕç вăрлăхĕсене те тасран туянмалла.

Ф. Матвеев шухăша каять. Унтан, кăшт тăхтарахпа, хăйне калаçма пулнĕ юлташ çине пăхса тавăрать:

— Апла пулсан та вĕсене эпир тупса çитерме пултаратпăр. Вăл марха мана хăратать. Мана тунтĕм вăйĕ шиклентерет.

Председатель умĕнчи цифрăсем пысăкланмаççĕ те, пĕчĕкленмеççĕ те — çирĕп план: пурĕ 500 гектар аксалартса хăвармалла. Колхозăн лашасем 43. Кашни лаша пуçне 11 гектар ытларах тĕрлĕ культурăсем акса, тĕрлĕ пахча-çимĕçсем лартса хăвармалла. Çапла вара, кăçал çураки ĕçĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хут пысăкланать. Çак вăхăтрах колхозăн хăйне кирлĕ кадрсем çитмеççĕ.

Çĕмĕрле районĕнче кăçал 39 колхоз председателĕ, 90 бригадир, 60 звеньевод, 25 агротехник, 34 яровизаторсемпе химизаторсем, машиноводсем 60 çын тата пахчаçăсем 35 çын вĕрентсе хатĕрлемелле, трактористсем пурĕ 52 çын кирлĕ пулаççĕ. Çакнашкал кадрсене, трактористсемсĕр пуçне, районра хатĕрлеме тытăнман, «Новая жизнь» колхозра та хăйне кирлĕ кадрсене вĕрентсе хатĕрлесси çинчен тĕплĕн шухăшласа пăхман. Колхоз пĕтĕмпе те 2 çынна трактористсен курсне вĕренме янă, унтан та пĕри вĕренме пăрахса килнĕ.

Ф. Матвеев пĕр самантлăха хускалмасăр ларса чӳречерен тулалла пăхса илет те каллех хăй умĕнчи цифрăсем ăшне кĕрет. Туртăм вăйĕ çинчен шутлать.

Колхозăн 39 тиха. Вĕсенчен 4 тихине халь ĕçе хăнăхтарнă, кӳлсе ĕçе вĕрентме юрăхлисем тата 12 тиха. Вĕсене халех ĕçе вĕрентмелле. Колхозра тата вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесем пур. Комбайнер П. Краснов Çĕнтĕрте чылай вăхăт ĕçлесе пурăннă. Вăл тата Украинăпа Дон таврашĕнче вăкăрсемпе ĕнесем ытармалла мар паха туртăм вăйĕ пулса тăни çинчен каласа парать. Председатель хускалать—чăнах та, мĕншĕн-ха ун çинчен вăл хăй шухăшласа пăхман? Аван шухăш, пархатарлă ĕç!

Çакнашкал аван шухăшсемпе пархатарлă ĕçсем колхозсенче халь нумай. Пулăр колхозсенче, куралăр: Эскетен колхозĕнчех тырă кĕлечĕсем таврашĕнче, урамсенче çĕмрĕк машинăсем, вĕсен пайĕсем саланса выртаççĕ. Мĕншĕн вĕсене пухмалла мар?

Хутарти колхозра кашни бригадăн 10—12 хăмăт çитмест. Иван Никифорович ут таврашĕсем хатĕрлеме тытăннă. Мĕншĕн çав хăмăтсене Иван Никифорович пек юсама, çĕнетме тытăнмалла мар? Мĕншĕн колхоз лашине чун-чĕререн юратса пăхмалла мар?

3. ТРАКТОРСЕМПЕ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕМ ТАТА ТУМАСĂР «ТУНĂ» ЯПАЛАСЕМ

Кăçалхи çураки кăларса тăратакан ыйтусене хирĕç ответлесе, Степан Стафик калать:

— Начар хатĕрленетпĕр...

Çĕмĕрле МТС-ĕнче Стафик юлташ çĕнĕ çын мар. Мĕн МТС организацилениренпех вăл кунта агроном пулса ĕçленĕ. Февралĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа вара вăл МТС директорĕн ĕçне туса пырать. Хăй вăл ĕçчен çын, хăйĕн ĕçне вăл витĕр пĕлсе тăрать, çуракине те çулсерен хатĕрленсе ăна ăнăçсăрах ирттермен. Кăçалхи ĕçсем вара ку вăхăта çитсе кал-калах мар, хăй сăмахĕпе каласан, МТС çуракине пачах çителĕксĕр хатĕрленет. 18 трактор çеç юсанă. Тракторсем кăçал чылай вăхăт хушши колхозсен хирĕсенчех ларчĕç. Халĕ те икĕ тракторĕ уйран килсе кĕмен. Пĕри Улхаш уйĕнче ларать, тепри Кăмаша колхозĕнче. Çапла пулнипе тракторсен чылай пайĕсем çухалнă, нумай тракторсен радиаторĕсем пăрахăçа тухнă. Комбайнсемпе сеялкăсем те колхоз уйĕсенчен тракторсен паркне пухăнман. Юр айĕнче, çил çинче пăсăлса ларакан комбайнсене пирĕн Эскетен, Вăрманкас уйĕсенче курма пур килчĕ. Сеялкăсем те итемсем çинче е кĕлетсем хушшинче ăçта килнĕ унта лараççĕ. Тракторсен паркне пухнă тракторсемпе ялхуçалăх машинисем те юр айне пулнă.

Стафик хăй те, МТС-ăн ытти работникĕсем те МТС хуçалăхĕ çавнашкал юхăннине пĕлеççĕ, хăйсем те ăна курнă. Çапах та МТС-ра йĕрке çук. Мĕншĕн çапла? Тракторсем мĕншĕн начар юсанаççĕ?

МТС-ăн тракторсене вăхăтра юсама пур майсем те пур. МТС-па юнашар комбинат, «Большевик» тата «Труженник» заводсем. МТС-ăн, калăпăр, тракторсем юсама кирлĕ токарьсемпе слесарьсем пулман, трактор пайĕсем çитмен, çитмеççĕ. Çав ыйтусемпе комбината е «Большевик» завода кайнă пулсан, рабочисем хуть мĕнле вăхăтра та пулăшма пултарнă. Вăрнарпа Етĕрне МТС-ĕсем çав пулăшусене илме пултарнă, Çĕмĕрле МТС-ĕ илеймен.

Чылай вăхăт МТС, унăн мастерскойĕ вутăсăр ларнă. Ку ĕнтĕ чăн та тамаша. МТС вăрманта ларать — йĕри-тавра вутă. Вутпине МТС хăй вăхăтĕнче кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме пултарнă. Анчах ăна туман, такам кӳрсе парасса кĕтнĕ. Районри хăшпĕр колхозсем те паянхи кунччене çуракине тивĕçлипе хатĕрленмеççĕ, теме кĕтсе лараççĕ. «Авангард» колхозри Григорьев бригадир хăйĕн сӳрисемпе урапăсем ăçтине те пĕлмест. Ун бригадин пĕр жнейки уйра юр айнех пулса юлнă, плугсем те юр айĕнче. Çак вăхăтрах колхозниксен пухăвĕнче, бригадăсенче Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне те сӳтсе-явнă, çуракине тахçанах хатĕрленсе çитме сăмах панă. Çакнашкал тĕслĕхсене Стафик та, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Чумейкин та чылай кăтартса пама пултармалла.

Хутар колхозĕ хăйĕн плугĕсене юсама Çĕмĕрлене леçсе панă. Мĕнле унта вĕсем юсанаççĕ? Колхоз председателĕ Мазяков вăл ыйтупа интересленмен-ха. Вăл 6-мĕш бригадăн бригадирĕ Яковлев çуракине хатĕрленсе çитни çинчен калать. Колхозра Яковлев бригади чăнах та лайăх ĕçлекен бригада шутланать. Анчах вăл та çуракине тивĕçлипе хатĕрленсе çитмен. Плугсене бригадир тимĕрçĕ лаççи умне пырса лартнă та, вĕсем унтах юр айне пулса ларнă. Тимĕрçĕ ĕçлес килнĕ чухне ĕçлет, ĕçлес кăмăл çук чухне пӳртрен те тухмасть. Урапасемпе сӳресем иртнĕ кĕркунне мĕнле пухса лартнă, халĕ те вĕсем çаплипех лараççĕ. Çав вăхăтрах райçĕрĕç пайĕ Çĕрĕç халăх комиссариатне юсамалли 150 сӳрене колхозсенче мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитерни, вăрлăхсене 90 процент таран триерсемпе тасатни çинчен пĕлтерет. МТС-ра та çакнашкал тумасăр «тунă» ĕçсемпе тĕл пулма пулать. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2 трактора МТС-ра юсаса пĕтернĕ, тесе шутланă. Çав 2 трактортан пĕрне çак иртнĕ кунсенче çеç юсаса пĕтерчĕç, тепри халĕ те юсанманнипех ларать.

4. КОЛХОЗСЕНЕ КУЛЛЕН ПУЛĂШСА ТАТА КУЛЛЕН ЕРТСЕ ПЫРАС ЫЙТУ ПИРКИ

Районри хăшпĕр работниксем Çĕмĕрле районĕнче çуракине çителĕксĕр хатĕрленнине çынсем çуккипе, туртăм вăйĕ сахаллипе тата ĕç нумаййипе ăнлантарса пама хăтланаççĕ. Стафик ку шухăшпа килĕшмест, вăл Çĕмĕрле районĕнче ялхуçалăх ыйтăвĕсене иккĕмĕш вырăна хăварни çинчен калать. Çакăншăн та мар Çĕмĕрле районĕнче çураки çавтери тимсĕрĕн хатĕрленеççĕ. Хутар колхоз председателĕ Мазяков юлташ калать:

— Агрономсем, ытти работниксем районран нумай килеççĕ. Вĕсем килеççĕ те каяççĕ, ĕçсем пирĕн çав-çавах начар-ха.

Районри работниксем колхозсенче сахалах пулмаççĕ. Анчах, Мазяков калашле, вĕсем пулаççĕ те каяççĕ, ĕçсем вара колхозсенче çав-çавах юлаççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозăн ферминче 5 пăру вилнĕ. Ку хыпар райăна çитсен, райçĕрĕç пайĕнчен Будилин зоотехникпа Михопаркин ветврач колхоза килеççĕ. Унччен вĕсем ку фермăра пулман. Фермăра вĕсем пăрусем мĕншĕн вилни çинчен тĕпчесе çырса каяççĕ, анчах ферма ĕçĕсемпе тĕплĕн интересленмеççĕ.

Февралĕн юлашки кунĕсенче райисполком председателĕ Носков юлташ хăй колхозсем тăрăх çӳрерĕ. Пĕр ирхине вăл «Комбинат» колхозра пулать. Кунта вăл колхоз председателĕ килте пулманнишĕн ятласа тухса каять. Çак кунах вăл Ленин ячĕпе тăракан, «Новая жизнь» тата «Авангард» колхозсенче пулма ĕлкĕрет. Кашни колхозрах вăл колхоз е ялсовет председательне тĕл пулать те вĕсенчен хăйне интереслентерекен ыйтусем тăрăх ыйтса пĕлет, мĕн тумаллине хушса хăварать, ятламалла пулсан ятлать те каллех тепĕр колхоза тухса каять. Иванова агроном колхоза тĕштырă вăрлăхĕсене тĕрĕслеме килет. Чăнах та, вăл вăрлăхсене тĕрĕслет, мĕн чухлĕ çитнă-çитменнине çырса илет. Ытти ĕçсем вара ăна пачах интереслентермеççĕ. Колхозăн, калăпăр, çĕрулми пăсăлса кайнă, пахча-çимĕç вăрлăхĕсем çитмеççĕ е плугсем юр айĕнчех архансса выртаççĕ. Вăл вĕсене курмасть, курасшăн та мар. Çапла вара район работникĕсем «килеççĕ те каяççĕ», анчах колхозра ĕç çав-çавах юлать. Носков юлташ пулнă колхозсенче ун хыççăн нимĕнле улшăнусем те пулмарĕç. Вăл пыриччен те, вăл кайсан та Эскетен колхозĕн итемĕ çинче колхозниксем питĕ юлхавлăн авăн çапрĕç, Саватерте вăл киличчен те, вăл кайсан та плугсемпе ытти ялхуçалăх машинисем юр айĕнчех выртрĕç. Вĕсене Носков юлташ, хăй колхоза ятарласах çураки ыйтăвĕсемпе килнĕ пулсан та, асăрхамарĕ. Çакна вара татăклăн тата куллен ертсе пыни теме çук.

И. МОИС.

Çĕмĕрле.

МУСКАВ 1942 ÇУЛТИ ФЕВРАЛЬТЕ. Укерчĕк çинче: Манеж площадĕнче. Инçетре курăнакани — Горький урамĕ.

Д. Дорин [illegible] фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Колхоза кĕреççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Юртакасси ялсоветĕнчи единоличниксем М. И. Калинин юлташăн «Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем çинчен» ятлă статйине вуланă хыççăн колхоза кĕме пуçларĕç. Тĕслĕхрен, çак кунсенче «Моряк» колхоза единоличниксен виçĕ хуçалăхĕ кĕчĕ. О. Николаев, А. Захаров единоличниксем колхоза кĕме заявленисем пачĕç.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

Государствăна тырă сутаççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пăлапуç Нурăс ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз государствăна кооперацин урлă 33 центнер тĕштырă сутрĕ. Çавăн пекех иртнĕ уйăхра Пизи ялĕнчи «Комсомолец» колхоз та государствăна 45 центнер тырă сутрĕ.

ТУКМАКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, заступлени туса пычĕç. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче противникăн контратакисене сирсе пăрахрĕç. Тăшмана пысăк сухатусем кÿнĕ.

Мартăн 16-мĕшĕнче нимĕçсен 47 самолечĕ пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 15 самолет çухалнă.

* * *

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн 16 пин тонна водоизмещениллĕ 2 транспорт, 1 тральщик тата 1 сторожевой карап путарнă.

* * *

Мартăн 16-мĕшĕнче пирĕн авиаци частĕсем нимĕçсен 6 танкне, грузсем тиенĕ 205 автомашинине, [illegible] 125 лавне, 13 [illegible], 36 орудие, зенитлă пулеметсен 22 точкине, 3 батарейине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 9 складне сирпĕнтернĕ, противникăн 4 батальона [illegible].

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче [illegible] пирĕн пĕр часть, пĕр кун хушши çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 600 çынна пĕтерсе тăкнă. [illegible] 2 орудие, 4 станковăй пулемет, 8 ручной пулемет, 70 винтовка, пĕр миномет, 16 автомат, [illegible] тата ытти çар пурлăхне тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче [illegible] халăх пурăнакан Д. пункт [illegible] пирĕн стрелковăй часть [illegible] противникăн пехоти [illegible]. Çапăçура тăшманăн 2 танк, 10 оруди, [illegible] тата ручной пулеметсем, 50 винтовка, [illegible] тытса илнĕ. Тăшманăн [illegible] вилнисем Выртса юлнă.

Нимĕç танкисем ушкăнĕ пирĕн пĕр стрелковăй подразделени [illegible]. Красноармеец Набоков юлташ [illegible].

Ленинград облаçĕнчи партизансен [illegible].

Нимĕçсен унтер-офицерĕ Карлинский [illegible].

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противникăн оборона рубежне çĕмĕрсе, нимĕçсене каялла чакарнă. Çапăçура тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.000 çын ытла пĕтнĕ, тăшманăн пĕр йывăр танкне тата 7 вăтам танкне çĕмĕрнĕ. 382 нимĕçе тыткăна илнĕ. Çакнашкал трофейăсем тытса илнĕ: 35 оруди, 80 пулемет, 88 миномет, 108 автомат, 357 винтовка, 3.500 снаряд, 85.000 патрон, 10.000 мина, 200 пистолет, танксене хирĕç пемелли 12 пăшал, боеприпассен, продовольстви тата обмундировани темиçе складĕ.

* * *

Калинин фронтĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллерин 2 дивизионĕ пĕр кун хушшинче тăшман миномечĕсен батарейине пусарса лартнă, çирĕплетнĕ чылай вырăнсене çĕмĕрнĕ, горючи складне сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен чĕрĕ вăйне пысăк сиен кÿнĕ.

Шидловская станцийĕнче Гитлер бандичĕсем мартăн 8-мĕшĕнче Знаменка ялĕнчи мĕнпур арçынсене вагонсем ăшне хĕвваласа кĕртнĕ те вагонсем çине автоматсенчен пеме тытăннă. 250 çынран 40 çын çеç чĕрĕ юлнă. Барвенково çывăхĕнче çак кунсенче темиçе тарăн шăтăк тупнă. Çав шăтăксенчен иккĕшне алтса пăхнă хыççăн вĕсенче гитлерла ирсĕрсем асаплантарса вĕлернĕ 77 çын виллине тупнă. Çавсенчен нумайăшĕнне аллисене мăкăлтанă, шăлĕсене çапса ÿкернĕ, куçĕсене чиксе шăтарнă, хăлхисене касса илнĕ, аллисемпе урисене пĕçертсе янă. Пырĕсене касса татнă çынсен виллисем те пур. Врачсем экспертиза туса тĕплĕн палăртнă хыççăн çак 77 çынна пурне те гитлеровецсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернине палăртнă.

* * *

Любекри (Германия) çар заводĕнче хатĕр продукцисен складĕнче пысăк пушар тухнă. Çак предприятире урăх çĕршывсенчен илсе килнĕ çынсем нумай ĕçлеççĕ. Пушара çав ютçĕршыв çыннисем тунă тесе, гитлеровецсем французсемпе итальянецсене темиçе çынна персе вĕлернĕ.

Мартăн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пысăк улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн гвардейски часть, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Çапăçура нимĕçсенне 6 оруди, 36 автомашина, 2 бронемашина, 2 тягач, 4 пулемет, грузсем тиенĕ 10 лав, боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын ытла вилсе пĕтнĕ. Пирĕн часть çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 4 оруди, 7 миномет, 11 ручной тата 2 станковăй пулемет, боеприпассен 2 складĕ, 5 мотоцикл тата ытти çар пурлăхĕсем те. Тепĕр участокра пирĕн стрелковăй часть нимĕçсенне 2 оруди, 8 миномет, 6 пулемет, боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă тата 8 оруди, 7 миномет, 12 пулемет тытса илнĕ. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 120 çын вилсе юлнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем противника хирĕç икĕ кун хушши çапăçса гитлеровецсене чĕрĕ вăй енĕпе тата техника тĕлĕшпе пысăк çухатусем кÿнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 2.150 çын вилсе юлнă. Пирĕн войскăсем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче —20 пулемет, 8 миномет, 27 автомат, 55.000 винтовка патронĕ, пулемет лентисем тата ытти хĕçпăшалсем нумай.

* * *

Халăх пурăнакан пунктшăн çапăçнă чухне пирĕн пĕр часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕ) нимĕçсен 16 ДЗОТ-не аркатнă тата пĕр оруди, 2 пулемет, 52 винтовка, 4 радиостанци тытса илнĕ, 260 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старши лейтенант Сидоров командир пулса ертсе пыракан танк нимĕçсем йышăнса илнĕ К. ялне пырса кĕнĕ. Хăюллă тапăнусем 6 ДЗОТ-а çĕмĕрнĕ, нимĕçсен батальонĕн штабĕ вырнаçнă çурта аркатнă тата салтаксемпе офицерĕсене 80 çынна çитти вĕлернĕ.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен П. юлташ командир пулса ертсе [illegible]

нимĕçсен подразделенийĕ çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Çапăçура партизансем нимĕç оккупанчĕсене 26 çынна вĕлернĕ тата 4 пулемет, 15 винтовка, 6 лаша тытса илнĕ. Темиçе салтака тыткăна илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 257-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 457-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Эберхард Весто çапла каласа панă: «Эпĕ полка февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче çитрĕм. Çав вăхăтчен эпĕ Германире пултăм, санитар пулма хатĕрлентĕм. Фронтра мана стрелок турĕç. Дивизи питĕ пысăк çухатусем тунă пирки командовани писарьсене, машинăсен водителĕсене, лавçăсене тата тылри ытти салтаксене пурне те малти позицисене ячĕ. Эпир юлашки вăхăтра халăх пурăнакан Ч. пунктĕнче тăраттăмăр. Çав пункт çине вырăссен артиллерийĕ пĕрмаях персе тăратчĕ тата сывлăшран пыра-пыра тапăнатчĕç. Пирĕн полк питĕ пысăк çухатусем турĕ. Хăшпĕр ротăсенче темиçешер салтак кăна тăрса юлчĕç.

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ Гос темĕнле Леонтина Зас патне çырнă çырура çапла пĕлтерет: «Эпир пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхсене пусса пĕтертĕмĕр ĕнтĕ. Часах акă çĕрулми те, аш-какай та пулмасть. Эпир хресченсен пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхĕсене, юлашки ĕнисемпе сурăхĕсене те туртса илетпĕр, никамран та нимĕн çинчен те ыйтмастпăр».

* * *

Гитлерла çынçиенсем хăйсем оккупациленĕ совет хулисемпе ялĕсенче мирлĕ çынсене вĕлерсе пĕтереççĕ. Таганрог хулинче юлашки вăхăтра кăна нумай çĕршер çынсене асаплантарса тата персе вĕлернĕ. Январĕн 18-мĕшĕнче хулара паллă мар çын нимĕçсен пĕр офицерне тата 5 салтакне вĕлернĕ пулнă. Çавна май февралĕн 19-мĕшĕнче 31-мĕш №-лĕ заводăн килкартинче ним айăпсăр старикĕсене, хĕрарăмсене тата ачасене 300 çынна персе вĕлернĕ. Январĕн 29-мĕшĕнче хула тулашĕнче 75 çынна персе вĕлернĕ. Январĕн 31-мĕшĕнче хĕрарăмсемпе ачасене 35 çынна персе пăрахнă. февралĕн 4-мĕшĕнче телеграф линине пăснăшăн 153 çынна персе вĕлернĕ, февралĕн 8-мĕшпе 9-мĕшĕнче 25 çынна персе пăрахнă.

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани

Наградăланă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин мартăн 17-мĕшĕнче орденсемпе медальсем панă

Герой-партизан И. Н. Кузин юлташ Ленин орденĕпе «Золотая Звезда» медалĕ тата Совет Союз Геройĕн званине пани çинчен пĕлтерекен грамота илет.

Тăшман тылĕнче нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан партизанла кĕрешÿре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн партизансен йышлă группине орденсемпе медальсем параççĕ. Орденсемпе медальсем илнĕ партизансем хушшинче: В. П. Мыларщиков, И. Н. Назаров, А. Е. Савушкина, В. Ф. Федоров тата ыттисем те.

Наградăланă партизансен ячĕпе В. П. Мыларщиковпа В. П. Прохорова юлташсем сăмах тухса калаççĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çар командирĕсен, политработникĕсен, çар инженерĕсемпе техникĕсен йышлă группи орденсемпе медальсем илет.

М. И. Калинин юлташ наградăланă юлташсене пысăк награда илнĕ ятпа пурне те ăшшăн саламлать. Саламланă хыççăн вăл партизансене çапла калать:

— Юлташсем, паян эпир партизансен йышлă группине наградăлатпăр. Партизансем, ман шутпа, хамăрăн Хĕрлĕ Çарăн помощникĕсенчен чи хастарлăраххисем пулса тăраççĕ.

Партизанла движени тăшмансен тылĕсене арпаштарса, аркатса янипе кăна мар хаклă, тăшманăн техникине чĕрĕ вăйне, унăн коммуникацине сиен кÿнипе кăна мар, тăшмана канăç памасăр, ĕна пĕр вĕçĕмрен каялла çавăрăнса пăхтарнипе кăна мар паха. Партизанла движени хресченсем хушшинчен, хуласенче ĕçлекен хамăр работниксем хушшинчен чи хăюллисене, чи паттăррисене палăртать. Вăл çапла.

Анчах партизанла движени пуринчен ытла акă мĕншĕн паха: вăл колхозниксен тата хулара пурăнакан массăсен тăшмана кураймаллăхне çул уçса парать, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте вĕсен боевой вăйне çул уçса парать. Тăшман тылĕнче, чи шалта пулсан та, партизанла движени тылри халăха çав территорие тăшман турткса илни вăхăтлăха кăна иккенлине ытларах ĕнентерет, вăл халăх вăйне фашистла захватчиксене хирĕç пĕтĕçтерет.

Çак енĕпе, халăх вăйне пĕр çĕре пуххса ăна нимĕç çарĕн чи шалти тылĕнче фашистла захватчиксене хирĕç кĕрешнĕ çĕре ярас енĕпе илсен, партизанла движени çавтери паха движени пулса тăрать.

Партизансем вĕсем совет влаçĕн тăшман тылĕнчи представителĕсем пек пулса тăраççĕ; вăхăтлăха тытса илнĕ районсенчи ялсемпе хуласенче пурăнакан халăх партизансенче совет влаçне курать, çавна пула унăн кĕрешÿри вăйĕ ÿсĕнет, çирĕпленет, вăл нимĕçсене хăвалаcа кăларасса ытларах та ытларах шанма тытăнать. Ку ĕнтĕ питĕ паха, хаклă япала.

Эпир паян нимĕç захватчикĕсен тылĕнче паттăррăн кĕрешекен çав боецсен пысăк группине наградăлатпăр. Партизансем сахал мар çухатусем курчĕç, вĕсене хăйсен кĕрешĕвĕнче сахал мар йывăрлăхсем курма тивет, ĕнтĕ вĕсем совет халăхĕнчен илнĕ наградăсем тивĕçлипе илнĕ наградăсем пулса тăраççĕ. **(Пурте алă çупаççĕ).**

Партизанство—вăл халăх вăрçа хутшăннин чи активлă формн. Ман шухăшпа, çуркуннепе çулла партизанла движени чакмалла мар пек, чакма мар, пурнăçри паллăсене пăхсан, вăл татах та ытларах ÿсĕ, партизансем тылра тăшмансене хирĕç татах та вăйлăрах кĕрешĕç.

Эпĕ паян наградăсем илекен партизансен çак пĕрремĕш пысăк группине çакна сунасшăн: унăн хăйĕн ĕçне малалла туса пыракансем пулччăр, çапла сирĕн пек наградăсем илме тивĕçлĕ партизансен групписем малашне татах та ытларах пулччăр, **(Нумай вăхăт хушши тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Çуракине тухма хатĕр

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче тăван çĕршывпа фронт валли ялхуçалăх продукчĕсем нумай кирлĕ. Кăçал пирĕн колхозсен уйхирĕсенче нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илмелле.

Тырпул тухăçлăхне ÿстересси çуракине лайăх хатĕрленнисе, кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттернинчен килет. Çакна эпир иртнĕ çулсенчи опытсенчен те авăн курса тăратпăр.

Кăçал пирĕн 106 гектар лаптăкĕ çине сурттыррисем акса хăвармалла, вăл шутра 18 гектар çине çĕрулми лартмалла тата 1 гектар техникăллă культурăсем акмалла.

106 гектар çĕр лаптăкĕ валли 166 центнер тĕштырă вăрлăхĕ, 270 центнер çĕрулми вăрлăхĕ кирлĕ. Вăрлăх тырăсене авăн çапса пĕтерне хыççăнах (авăна декабрĕн малтанхи кунĕсенче çапса пĕтернĕ) çитсолĕклĕ таран уйăрса хутăмăр. Тырпул туса илме вăрлăхсене лайăх сортласа тасатмалла, тивĕçлĕ кондицине çитермелле. Ватписем каланă сăмаха—«мĕн акатăн—çавă шăтать»,—тенине асра тытса, эпир вăрлăхсене сортласа тасатма авăн çапса пĕтерне хыççăнах тытăнтăмăр. Вăрлăх 20,5 центнер пăрçапа ясмăка алăпа суйласа тасатрăмăр, тулă вăрлăхне алăпа, сĕлĕ вăрлăхне триерпа сортланă хыççăн, тепĕр хут алапа аласа тасатрăмăр. Вăрлăх тасатнă çĕрте 67 çулти колхозник Иван Лукин, куçса килнĕ Е. Беглицова т. ыт. лайăх ĕçлерĕç.

Пирĕн колхозра икĕ бригада. Çуракине ирттерме кашни бригадăна 6 плуг, 6 сÿре кирлĕ. Колхоз тимĕрçи Н. Львов эрне хушшинче плугсене юсаса çитерчĕ. Сÿресем малтанах юсавлă пулнă. Плугсемпе сÿресене сарайне типĕ çĕре пухса лартрăмăр.

Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерме ĕçре опытлă колхозниксем кирлĕ. Çакна шута илсе эпир сухалакансене, сÿрелекенсене, акакансене тата вăрлăх турттаракансемпе паллă тăвакансене пурне те пулларуллă, тăрăшса ĕçлекен колхозниксене уйăртăмăр. Сухалаканĕсем: М. Прохорова, М. Иванова, П. Платонова, О. Ермолаева, Е. Григорьева, Т. Иванов юлташсем; сÿрекенсем: К. Иванов, А. Плотникова; акакансем: А. Захарова, Ф. Андреев, Т. Платонов, Ф. Терентьев юлташсем пулаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче эпир тылра колхозра, вăрçăри пекех, кашни сехетпе, кашни минутăпа туллин усă курса, çуракине агротехника кăтартнă срокĕсенче тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн кĕрешетпĕр. Çапла çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕмĕр. Вăрлăхсем пирĕн сортлă таса; ялхуçалăх машинисем юсавлă; ут таврашĕсем çителĕклĕ; лашасем вăйлă та самăр; вĕсене Р. Семенов, И. Иванов, Т. Федоров конюхсем лайăх пăхаççĕ; çĕре çемçетме 55 тонна тислĕк, 15 центнер кайăк-кăшăк тислĕкĕ, 10 центнер ытла кĕл пухса хатĕрлерĕмĕр.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа пирĕн колхозран чылайĕшĕсем тăван çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çарне кайрĕç. Çапла пулин те эпир, хамăрăн мĕнпур вăя мобилизацилесе, уйхир нихăçан курман вăйлă тырпул туса илессишĕн ырми-канми ĕçлĕпĕр, хамăрăн юратнă тăван çĕршыва, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара мĕн чухлĕ тырă кирлĕ, çавăн чухлĕ туса парăпăр.

П. ЯКОВЛЕВ.

Çĕрпÿ районĕнчи «КИМ» колхоз председателĕ.

Комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçре

ИШЛЕЙ. Ярабайкасси ялсоветне кĕрекен «Автогигант» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем çуракине хатĕрленес енĕпе кĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Организаци секретарĕ Н. Горбунов ертсе пынипе комсомолецсем колхоз çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен пухура сÿтсе-яврĕç. Унта вĕсем ĕçри çитменлĕхсене кăтартрĕç. Çав пухурах çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе практикăллă ĕçсене палăртса план турĕç, уйрăм комсомолецсене ĕçсем парса тухрĕç. Тырă сортлас ĕçе ертсе пыма А. Ильина комсомолкăна уйăрчĕç. Халĕ вăл колхозри çамрăксемпе пĕрле 76 центнер тырă сортланă. А. Михайлова, Н. Лукина комсомолкăсем пуçарнипе 8 центнер пăрçа алăпа суйланă. Н. Александров, В. Горбунов, Б. Матюшкин пионерсем 8 центнер кĕл, 7 центнер кайăк-кăшăк тислĕкĕ пухнă. М. Осипов комсомолец çине ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе ответлăх хунă. Вăл икĕ касăллă 10 плуга тата пĕр касăллă 11 плуга, пĕр сеялкăна тимĕрçĕ лаççине илсе кайса юсаттарнă. Халĕ плугсен, сÿресен туртисемпе пăявĕсене хатĕрлеççĕ. Ку колхозри комсомолецсем çуракиччен лашасене мăнтăрлатас тĕлĕшпе те интереслеснеççĕ. Вĕсем конюхсем лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслеççĕ.

Ишлей МТС-ĕ тракторсене юсаса пĕтернĕ. Халь унти комсомолецсем çуракине хатĕрленме пулăшма колхозсене туха кайнă. М. Толстова—«Труд» колхозра, агроном М. Степанов Ишек участокĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Н. РУСАНОВ.

ВЛКСМ Ишлей райкомĕн секретарĕ.

МАШИНĂСЕН ПАЙĔСЕНЕ ПУХНĂ

СОВЕТСКОЕ. Мартăн 15-мĕшĕнчи воскресникре 128 комсомолец, 382 пионер, союзра тăман 229 çамрăк пулчĕç.

Воскресенике Хучашра, Çухрара, Мăн Чурашра, Качикассинче, Анат Явăшра авăн хуттшăнчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче тирпейлĕх, перекетлĕх уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăнине, тăван çĕршывшăн кашни винт, гайка хаклине, вĕсем пурте машинăсене юсаса хăвăртрах ĕçе яма пулăшнине ăнланса илсе, çамрăксем машина пайĕсем пуçтарчĕç. Анат Явăшра ку ĕçе комсорг В. Свешников юлташ авăн ертсе пычĕ. Вĕсем 45 винт, 23 гайка, 7 шестерня, 16 плуг тимри, 3 центнер тимĕр-тăмăр пухнă.

Е. ЧУГУНОВА.

Сывлăшран тапăннипе химиллĕ тапăнуран сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар хулинчи вырăнти штабăн 1942 çулти мартăн 18-мĕшĕнче кăларнă 5-мĕш номерлĕ приказĕ

1. 1942 çулти мартăн 19-мĕшĕнчен пуçласа хулара, рабочи поселоксенче, хула çумĕнчи колхозсенче çÿрекен пур автомашинăсен çутисене те маскировка тумалла.

2. Автотранспорт хуçалăхĕсен руководителĕсемпе пур шоферсене те çутта маскировка тумалли пур правилăсене те пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пыма хушас.

3. Шупашкар хулинчи ĕççынни депутачĕсен совечĕн Исполкомĕ 1941 çулти ноябрĕн 5-мĕшĕнче панă распоряжени тăрăх çутта маскировка тăвас тĕлĕшпе правилăсене пăсакан çынсене администраци енĕпе айăпласа 100 тенкĕ штраф тÿлеттермелле, çав правилăсене тăтăшах пăхăнмасăр, юриех пăсакан çынсене суда парса вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх уголовнăй йĕркепе айăплемалла.

4. Хулара, Чапаевски тата Сосновка рабочи поселокĕсенче, хула çумĕнчи колхозсенче пурăнакан пур граждансене те Шупашкар хулинчи ĕççынни депутачĕсен исполкомĕ çутта пĕтĕмĕшпех маскировка тăвас тĕлĕшпе ноябрĕн 5-мĕшĕнче кăларнă распоряженине пĕтĕмĕшпех пурнăçлама хушас.

5. Çак приказа пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăма Милици оргăнĕсене, автоинспекципе урам комитечĕсене хушас.

Сывлăшран тапăннипе химиллĕ тапăнуран сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен вырăнти штаб начальникĕ **И. ЗОЛОТНИКОВ.**

Германин çарĕ арканса пыни

СТОКГОЛЬМ, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Фронтран отпуска таврăнакан нимĕç салтакĕсем Германин шалти тылĕнче алхасса çÿренисем вăйлансах пыраççĕ. Çавна кура, «Дагенс Нюхетер» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи командованийĕн ку тĕлĕшпе ятарласах инструкци кăларма тивнĕ. Çав инструкцире отпуска таврăнакан салтаксем тĕлĕшпе çапла каланă: вĕсен «хăйсемпе пĕрле скамейкăсене илсе каймалла мар, чугунçул çинчи вагонсен чÿречисенчен кантăксене кăлармалла мар, тĕл пулнă малтанхи çуртах çĕмĕрсе кĕме юрамасть, паркетсемпе, урай хăмисемпе вутă хутнă çĕрте усă курмалла мар, çĕрулми шыратăп тесе урай хăмисене хăпартмалла мар, мĕншĕн тесен Германире урай хăмисем айĕнче çĕрулми выртмасть», тенĕ.

Нимĕçсен аманнă салтакĕсен йышĕ пысăк

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Копенгагенран илнĕ сведенисем тăрăх, нимĕçсен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче аманнă салтакĕсемпе офицерĕсем Данири госпитальсене пĕрмаях пырса тăраççĕ. Дани госпиталĕсене пурне те нимĕçсем туртса илнĕ. Аманнă нимĕçсене вырнаçтарас тесе чирлĕ датчансене госпитальсенчен кăлара-кăлара ывăтаççĕ.

Финсен фашистла çарĕн пысăк çухатăвĕсем

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агенствин Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: финсен парламенчĕн членĕ Фрич, Стокгольма пынăскер, финсем çак вăрçăра пысăк çухатусем тÿснине йышăннă. Фрич каланă тăрăх, финсен хăшпĕр хулисенче пĕр арçын та тăрса юлман.

Югославири партизансем кĕрешме чарăнмаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Бернри корреспонденчĕ çапла çырать: нимĕçсемпе итальянецсем контроль туса тăракан Белград пичечĕ кулленех Югославири партизансем кĕрешме чарăнманни çинчен, вĕсем нимĕçсемпе итальянецсен гарнизонĕсем çине, чугунçулсем çине пыра-пыра тапăнни çинчен çырать. Белград пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Топлица районĕнче, Вальево çывăхĕнче, партизансем 33 полицейскине тытса хĕненĕ. Югославин кăнтăр пайĕнче партизансем Куршумлия ятлă хула çине пырса тапăнса, унти гарнизона сахал мар çухатусем кÿнĕ.

«Нью-Йорк Таймс» пĕлтернĕ тăрăх, Боснире Югославири партизансем Итали войскисен колонни çине атака тунă. Çав атакăра партизансем темиçе танк тата боеприпассем тиенĕ темиçе автомобиль тытса илнĕ. Нимĕçсем Югославире пурăнакан халăхсене çавăншăн хытă асаплантараççĕ. Лития тата Брежице районĕсенче, ĕлĕк словенсем пурăннă çĕрте, халĕ пĕр словена та курма çук, вĕсене пурне те урăх вырăнсене куçарнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерствин коммюникинче çакна кăтартса панă: Филиппин утравĕсем çинче нимĕнле вăрçă операцийĕсем те пулса иртмеççĕ. Америкăн подводнăй лодки, Япони шывĕсенче çÿрекенскер, Японин грузовой пароходне путарнă. Филиппин районĕнче Японин 3 пин тонна водоизмещениллĕ танкерне путарнă. Мартăн 14-мĕшĕнче Америкăн 9 истребителĕ, Австралин çурçĕр çыранĕн районĕнче патрульре вĕçсе çÿренĕ чухне, японецсен истребительсем хÿтĕлесе пыракан бомбардировщикĕсен пысăк соединенине атакăланă. Противникăн йыш тĕлĕшĕнчен вăйсем пысăкрах пулнă пулин те, Америка самолечĕсем противника хирĕç çапăçăва [illegible]. Америка истребителĕсенчен пĕри противникăн самолетне пырса çапса ÿкернĕ. Самолетсем иккĕшĕ те пĕтнĕ. Японецсен пĕр бомбардировщикне тата тепĕр истребительне персе антарнă. Америкăн пур самолечĕсем те, пĕтнĕ пĕр самолетсăр пуçне, хăйсен базине сиенленмесĕр таврăннă.

Ява çывăхĕнче пулнă тинĕсри çапăçу

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 15-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс министерстви официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: февралĕн 27—28-мĕш числисенче Ява çывăхĕнче пулнă тинĕсри çапăçура союзлă державăсен 12 çар карапĕ пĕтнĕ, японецсенне 8 карап пĕтерсе тăкнă.

Паллă мар самолетсем Турцин Милас хули çине бомбăсем пăрахни

АНКАРА, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Анатолири агентство çапла пĕлтерет: «Мартăн 16-мĕшĕнче 00 сехет те 55 минутăра ирхине ютçĕршывăн 3 самолечĕ, çутатмалли ракетăсемпе усă курса, Турцин Милас хули çине тата унăн таврашне 15 бомба пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ; темиçе çурта сиенленĕ, 2 çынна вĕлернĕ, 1 çынна амантнă. Халĕ тĕпчесе тĕрĕслеççĕ, ун хыççăн тивĕçлĕ демаршсем пулмалла».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕРАПЕВТИЧЕСКОМУ
отделению Чебоксарской больницы
ТРЕБУЮТСЯ
санитарки
Обращаться: Чувашская ул., дом № 22,
Терапевтическое отделение.

Чебоксарской хлопчато-бумажной фабрике срочно требуются:
1. Трепальщики
2. Ленточницы
3. Банкаброшницы
4. Ватерщицы и с"емщицы
5. Мотальщицы
6. Шлихтовальщики
7. Ткачи
8. Слесари
9. Токари
10. Водопроводчики
11. Шорники
12. Батанщики
13. Женщины и мужчины на переквалификацию по специальностям прядильной и ткацкой фабрики.
Снабжением рабочие обеспечиваются через столовую и ларек фабрики.
Оплата труда—сдельная.
С предложениями обращаться в отдел кадров фабрики по адресу:
ул. Карла Маркса, 20.
2—1.

Чебоксарская Техно-ткацкая фабрика
принимает мужчин, женщин и подростков на переквалификацию и обучение по специальностям:
токаря, слесаря, столяра, ткачей, мотальщиц, плетельщиц.
ТАМ ЖЕ ТРЕБУЮТСЯ
возчики, охранники, чернорабочие.
Квалифицированные рабочие обеспечиваются общежитием: при фабрике работает столовая и хлебно-продуктовый ларек. Обращаться по телефону № 7—46 или поселок Волгостроя, помещение бывш. Черепичного завода.

Чувашскому тресту "Росглавхлеб"
ТРЕБУЕТСЯ
главный бухгалтер.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары ул. Калинина, 6.

ЧУВАШТЕХЖИРПРОМУ
ТРЕБУЮТСЯ:
зав. снабжения, экономист, ст. бухгалтер, рабочие и работницы в цеха и возчики.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Канашская, 17, телефон 1-63.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропаганда пайĕн парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство коммутаторĕн — 0—23.

НТ 1018. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: л;